К 84.09(=Чув)
Т 88
Ч-44131

Валери ТУРКАЙ

# ВĔÇЛЕНМИ ВĔÇЕВ



Национальная библиотека ЧР
4-044131

Чур К84.09(=Чув)
Т88

Валери ТУРКАЙ

# Вĕçленми Вĕçев

Шупашкар – 2009

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5

Т 88

*Кĕнеке «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» Акционерсен уçă обществи (Генеральнăй директорĕ – **Юрий Алекссевич Попов**) укçа-тенкĕпе пулăшнине пула пичетленет.*

*Автор çак сумлă коллективпа унăн ертӳçине чĕререн тав тăвать, çĕнĕ çитĕнӳсемпе телей сунать.*

**Туркай В.В.**
Т88 **Вĕçленми Вĕçев.** Сăвăсем. Шупашкар – 2008. – 128 с.

Чăваш халăх поэчĕн Валери Туркайăн çĕнĕ кĕнекинче авторăн юлашки вăхăтра çырнă тата халиччен ниçта та пичетлемен сăввисем кун çути кураççĕ.

«Вĕçленми Вĕçев» кĕнекере – сăвăçăн Юратăвĕ, Ыратăвĕ, Вĕçленми Вĕçевĕ.

Проверено 14 СЕН 2017

И-44231

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

© В.В. Тургай 2009

# ИРĔККĔН ВĔÇЕКЕН ТУРĂ КАЙĂКĔ

Валери Туркай чăваш тĕнчине çĕрĕше пуçланă карта хăмисене чăл-пар аркатса-ватса тенĕ пек пырса кĕчĕ. Хĕрӳ. Йăлкăшса выртакан кăвар çинче çара уран утма пултарассăн. Сăмахĕсем пат тӳррĕн. Чĕнӳллĕ: «Ухмаха персе йăлăхмарăр—и? Чурасем пулса тăранмарăр-и?». Çеçпĕл сассиех. Ахăртнех чăвашлăхшăн чĕрине вутта пăрахнă сăвăç хыççăн çакнашкал чун ыратăвĕпе Чăвашăн Урамĕн варрине иртекенех пулманччĕ те пулас. Кăштах йăнăшатăп мĕн — Хусанкай пулнă. Çеçпĕл хăйне пăталанă чăваш Хĕресне хăй вăхăтĕнче Хусанкай ярса тытнă, ун хыççăн — Туркайччен — çав хĕрес никамах та кирлĕ пулман пулмалла, чăваш интеллигенцине совет ялавĕ, паллах, çав хĕресрен хаклăрах пулнă ĕнтĕ.

Çеçпĕл — Хусанкай — Туркай — пĕр чĕрĕ тĕвĕ.

Çеçпĕл пек, Хусанкай манер пулмашкăн хăтланса пăхма пулать, ахăртнех. Анчах *чăнни* пулаймастăн. Ку вăл — чун тăрăмĕ, тĕнчене курса—пĕлсе—туйса тăни, халăха кашни пĕр çынни таран сума суни, хаклани, юратни, унăн ыранлăхĕшĕн хăвна хĕрес çумне пăталама пултарни.

«Гений — это нация в одном лице», — тенĕччĕ вырăс çыравçи Федор Абрамов. Эпĕ Туркая чăваш генийĕ теместĕп, вăл эпир пĕлекен чăвашран пачах урăх çыннăн туйăнать, пирĕн евĕр сăпайлах та мар — «*Халь «йăваш» тени «мĕскĕн» тениех*»; сăмаха куçран калать; эпир — вăлтса, аякран. Тĕрĕссипе, пĕтĕм япалана вăрттăн тума хăнăхнă эпир — вăрттăн вăрлатпăр, вăрттăн саватпăр, вăрттăн çыртатпăр, вăрттăн ĕмĕтленетпĕр — вăрттăн...

вăрттăн... Туркай — пĕтĕмпех уççăн, тӳррĕн. Тепĕр чух — кăнттаммăнрах та. Пĕртте чăвашла мар. Çав вăхăтрах Туркай — чăвашран чăваш, паллах. Кам вăл Туркай? Мĕнле йышши чăваша сăнарлать вăл? Е унра пирĕн иртнĕ пурнăçри сумлă, стайлă, вăйлă йăх—кăкăмăр чăвашăн юнĕ çапла юн тымарĕсене шăнăçаймасăр вĕресе тăкăнса тăрать? Е ыранхи кун чăвашĕ, Çеçпĕл сĕмленнĕ, чĕннĕ, ĕмĕтленнĕ çĕнĕ чăваш, шăпах çапла пулма тивĕç. Туркай — ыйту нумай çуратакан сăвăç, çын. Вăл — тĕрлĕ: хĕрӳ, çиçĕм пек çиçет, сунать е пĕр вăхăт сӳнесле йăсăрланнă пек — «*Ман кĕрешессĕм те килмест, Ман çĕнтерессĕм те килмест...*», тепĕр чух ачаш, çепĕç; пулать хаяр та, усал та, анчах тăшмана та чулпа пемест — «*Эпир санпа, тăванăм, Килмен çынна сăлтавсăр хур тумашкăн*». Унăн кашни сăвви — хăйне, хăйĕн чунне алсатуль пек тавăрни: килĕшетĕп — килĕштерĕр, килĕшместĕп — сирĕн ирĕк. Туркай куçран пăхса калаçать, пурнăçпа та вăл куçран пăхса пурăнать. Уçă куçпа — «*Иккен, çын куçĕ уçăлтăр тесен, Çын куçĕнчен уçă куçпа тинкермелле*». Уçă куçпа куçран пăхма чăннисем, чăнлисем, вăйлисем, тасисем çеç пултараççĕ. Вăйлă пулас тесен, ирĕклĕ пулмалла, сăнчăр татмалла. Каллех Çеçпĕл чĕнĕвĕ, Хусанкай пилĕ.

Туркай — ирĕклĕхре ирĕккĕн вĕçекен Турă кайăкĕ, вăл ыттисене те çав ирĕклĕхе чĕнет.

**Арсений ТАРАСОВ**



*Чиркӳ хӗресӗ Хӗвелпе хӗмленчӗ…*

## ЧĂНЛĂХ

пĕр çын асапланать
ик çын
виç çын асапланать
пин çын...–
Т ĕ н ч е -
асап танатинче
асап танатинче –
Т ĕ н ч е

пĕр çын телей курать
ик çын
виç çын телей курать
пин çын...–
Т ĕ н ч е -
телей ытамĕнче
телей ытамĕнче
Т ĕ н ч е

пĕр çын асапланать
ик çын...
пĕр çын телей курать
ик çын...

21.03.06

## ТĔРЛĔРЕН

Чĕре те тĕрлĕрен тапать.
Хăш чух мăнаçлă вăл.
Хăш чух
Унран йăвашраххи те çук.
Чĕре те тĕрлĕрен тапать.

Кăвайт та тĕрлĕрен çунать.
Хăш чух хăватлă вăл.
Хăш чух
Унран халсăрраххи те çук.
Кăвайт та тĕрлĕрен çунать.

Хĕвел те тĕрлĕрен çиçет.
Хăш чух хаваслă вăл.
Хăш чух
Унран кичемреххи те çук.
Хĕвел те тĕрлĕрен çиçет.

Туркай та тĕрлĕрен пурнать.
Хăш чух телейлĕ вăл.
Хăш чух...
Туркай та тĕрлĕрен пурнать.

12.03.06

x x x

Пĕрисем шутлаççĕ-тĕр
тепĕр чух:
«Çав Туркайăн пурнăçĕ –
пыл та çу!»
Пыл та çу – ман пурнăçăм,
пыл та çу!
Ма тесен манран пуян
çын та çук!

Ирхине хĕвел пăхать
кантăкран –
эп – телейлĕ, эп – хавас,
эп – пуян.
Арăм ăшшăн тинкерет
куçăмран –
пур-ши пысăкрах телей
çакăнтан?

Тин çеç тунă сăрипе
хăналать
ман аннеçĕм пĕртен-пĕр
ывăлне –
эп – телейлĕ, манăн чун
савăнать.
Тав тăватăп пуç тайса
аннене.

Икĕ хĕрĕм манăн –
ик чиперук.
«Юрататпăр аттене!» -
теççĕ те –
çук ман пек телейлĕ çын,
урăх çук.
Ман телейĕм перĕнет
пĕлĕте.

Тăван халăха чунтан
юратса,
шеллемесĕр вăй-хала
ĕçлесен –
эп – телейлĕ. Эп пурнатăп
шанса
манăн çăлтăр ĕмĕрех
çиçессе.

Пĕрисем шутлаççĕ-тĕр
тепĕр чух:
«Çав Туркайăн пурнăçĕ –
пыл та çу!»
...Пыл та çу – ман пурнăçăм,
пыл та çу.
Ма тесен манран пуян
çын та çук.

15.03.2006

## ЧĔРЕ СУРАНĔ

Эп ăна йĕркеллĕ çын тесеччĕ.
Эп ăна ĕненнĕччĕ тахçан.
Эп унпа пĕр сукмакпа утмашкăн
Хатĕр пулнă, айванскер, ялан.

Сахал мар ăна эп ырă турăм
(Ырă çын тесе-çке эп ăна).
Тав тумашкăн вăл, паллах, пĕлетчĕ.
Вăл пĕлетчĕ килĕшме мана.

Ыр сăмах вăл маншăн шеллеместчĕ,
Йăл кулса пăхатчĕ куçăмран.
Эп шутлаттăм: хисеплет чăнах та.
Эп шутлаттăм: çынлăх пур çынра.

...Малтанах эп ним те ăнланмарăм...
«Сутнă, - терĕç, - сан тусу сана!..»
Кам?! Мана-и?! Вăл-и?! Ĕненместĕп!..
Ĕненместĕп!.. Ку – элек кăна!

Ĕненместĕп!.. Ыттине сутсан та,
Вăл м а н а сутма пултарайман!
Вăл мана!.. Эп уншăн!.. Ĕненместĕп!..
Кун пекки пултараймасть пулма!..

...Малтанах эп, чăн та, ĕненмерĕм.
Халь – ларатăп, пуçăма усса.
Ӳт илмест çаплах чĕре суранĕ,
Çаплипех тăрать вăл юнăхса.

Ӳт илмест çаплах чĕре суранĕ.
Лăпланмасть аманнă чунăм ман.
...Эп ăна йĕркеллĕ çын тесеччĕ.
Эп ăна ĕненнĕччĕ тахçан.

22.04.06

## УСĂЛЛĂ КАНАШ

Чăрмантаратăп-им сире эп?
Чăрмантаратăп.
Тарăхтаратăп-им сире эп?
Тарăхтаратăп.
Кĕвĕçтеретĕп-им сире эп?
Кĕвĕçтеретĕп.
Ытла та йывăр-им сире?
Ытла та йывăр.

Мĕнех, тăн парăр айвана!
Мĕнех, тăн парăр!
Мĕнех, тĕп тăвăр пуçтаха!
Мĕнех, тĕп тăвăр!
Тен, çăмăл пулĕ сывлама,
Тен, çăмăл пулĕ.
Тен, ирĕк пулĕ пурăнма.
Тен, ирĕк пулĕ.
Тен, чăрмантармĕç тек сире.
Тен, чăрмантармĕç.
Тен, тарăхтармĕç тек сире.
Тен, тарăхтармĕç.
Тен, кĕвĕçтермĕç тек сире.
Тен, кĕвĕçтермĕç ...

Чăрмантаратăп-им сире эп?
Тарăхтаратăп-им сире эп?

20.03.07

ЁМЁРХИ

...вара
шакалсем
шăлĕсене
пуçлаççĕ
шаккама...

(ку – ĕмĕртенпе
ку – ĕмĕрлĕхе)

пăланĕ – пит илемлĕ-çке!
пăланĕ – пит телейлĕ-çке!
пăланĕ – пит хăватлă-çке!

...вара
шăлĕсене
пуçлаççĕ
шаккама
шакалсем

(ку – ĕмĕрлĕхе
ку – ĕмĕртенпе)

02.03.05

x x x

Камран тата мĕнрен кулатăр?!
Кулатăр çын асапĕнчен.
Çын ăшĕ çуннинчен кулатăр,
Кулатăр çын куççулĕнчен.

Мĕне тата кама таптатăр?
Таптатăр çыннăн Ĕмĕтне.
Паттăрлăха эсир таптатăр,
Таптатăр халăх Шанчăкне.

Мĕнех... Кулсамăр, таптасамăр.
Мĕнех... Алхасăр, май пур чух.
Йăлтах пур сирĕн. Çук – Пуласлăх.
Йăлтах пур. Вилĕмсĕрлĕх çук.

01.03.06

x x x

Малтан Çынна
юратăр!
Йыт-качкана –
кайран.
Малтан Çынна
пуç çапăр!
Тĕнче мулне –
кайран.
Турра! Турра
тав тăвăр –
çын телейне
курсан!
Сире юратĕ
Турă –
ç а к С у к м а к п а
утсан.

14.06.2000

## ПУЛАТЬ ТЕМЛЕ ТЕ

*(Экспромт)*

Пулать
темле те:
йӗрес вырăнне
тивет кулмашкăн
ахăлтатса.

Пулать
темле те:
канас вырăнне
тивет утмашкăн
шăла ҫыртса.

Пулать
темле те:
юрлас вырăнне
тивет лармашкăн
пуҫа усса.

Пулать
темле те:
пурнас вырăнне
тивет выртмашкăн
юн юхтарса.

Пулать
темле те.
Темле те
пулать.
Ҫапах та пурпӗр
пурăнас пулать.

Ҫапах та пурпӗр
пурăнас пулать!
Ҫапах та пурпӗр
пурăнас
пулать!..

09.08.06

## ВĂЛ АВĂННĂ КĂНА

*Юрий Титова*

Вăл
авăннă кăна.
Вăл
хуçăлман.
Вăл
авăннă кăна.
Ăна
май çук
хуçма.

04.03.06

# ТĂШМАНĂМСЕНЕ

*Анатолий Потемкина*

Тавах сире, тăшманăмсем –
Ман хаклă çыннăмсем!
Тавах сире, ман чапăма
Çӳле çĕклекенсем!..

Тавах сире – мана кичем
Паманшăн пурăнма!
Тавах – хистенĕшĕн мана
Хăюллăрах пулма!

Анчах та пуринчен ытла
Тавах сире – мана
Вĕрентнĕшĕн телей тупма
Кĕрешӳре кăна!..

Аван та мар – эп, тен, хăш чух
Кӳрентеретĕп пуль
Сире – хам авăнманнипе,
Тăкманнипе куççуль.

Каçарăр – айăплă: çаплах
Пурнатăп эп. Вилмен.
Каçарăр – манăн куçăмра,
Таса Хĕлхем сӳнмен.

Ман пур – мăнаçлăх, пур – тĕллев.
Пур, тав Турра, вăй-хал.
Пур – Юрату. Çунатăм пур.
Пур – çутă Араскал...

Эп – çылăхлă: ман вăхăт çук
Аса илме сире.
Капла та темшĕн те çунать
Ман канăçсăр чĕрем.

...Çапах та тав сире, тавах,
Ман хаклă çыннăмсем,
Сире – мана паттăртарах
Пулма хистекенсем!

19.03.06

И-44131
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПОЭТ ТАТА ПАТША

Поэт
тата
патша.

Мĕнех кунта ç ĕ н н и калайăн.

...Шута хумах тивет
Поэтăн... патшана.
Шута хумах тивет.

02.03.05

## ТЕЛЕЙ КАЙĂКНЕ

Ăçта вĕçсе çӳретĕн эсĕ?!
Ăçта шырамалла сана?!
Пĕрре кăна, тархасшăн, курăн!
Пĕрре кăна кăтарт хăвна!

Пĕлетĕп эп: эс – пур. Пурах эс.
Эс – ман çумра, эс – юнашар.
...Е эс пĕлсе пытарăнатăн?
Е эп шыратăп тĕрĕс мар?..

Çапла пурнатпăр: э п – шыратăп.
С а н а шыратăп эп ялан.
Э с – юнашар вĕçсе çӳретĕн.
Э с – яланах таран манран.

Çапла пурнатпăр: э п – шыратăп.
Э с – яланах таран манран.
...Пĕрре кăна, тархасшăн, курăн!
Вара каллех çухал кайран!

21.04.06

# ХĂВАРĂР-ХА ПĔЧЧЕН МАНА, ТАРХАСШĂН!

*Н.С. Карлина*

Хăварăр-ха пĕччен мана, тархасшăн!
Пĕр кун, ик кун, е пĕр эрне çеç ман
Çак Çĕр çинче хам пĕлнĕ пек пурнасчĕ,
Хам пĕлнĕ пек утса çӳресчĕ ман.

Хăварăр-ха пĕччен мана, тархасшăн!
Элле эсир халтан кайман-и-ха
Ман ЭП те пуррине шута хумасăр,
Шута хумасăр манăн МАНЛĂХА?

Пулсаччĕ вăхăт – урăхла эп çынччĕ.
Пĕчченлĕхре кураттăм эп тăшман.
Эп хамран хам таçта, темме тараттăм,
Кĕрешекен пулас килетчĕ ман.

Кĕрешмен мар – кĕрешнĕ – ир те, каç та.
Аманман мар – пайтах ман сурансем.
Арçын тени суранланса курмасăр
Ăçтан калайтăр «эп – Арçын!» тесе?

Кĕрешмен мар – кĕрешнĕ... Халь, ав, темшĕн
Пĕчченлĕхе савать ман чун-чĕре...
Хăварăр-ха пĕччен мана, тархасшăн,
Чуна сиплен Таса Пĕчченлĕхре!

21.10.06

х х х

Чиркӳ хёресе хёвелпе хёмленчӗ.
Сас пачӗ чан, кӗлле кӗме чӗнсе.
...Паян пӗри «эп – ӗненместӗп!» терӗ.
Эп ун енне тинкертӗм шеллесе.

Ун куҫӗнче эп куртăм ҫăмăлттайлăх.
Тата мăнкăмăллăх эп куртăм ҫав куҫра.
Кун пеккисем чăнах та ӗненмеҫҫӗ.
Кун пеккисемшӗн шурă та – хура.

Кун пеккисем те кирлӗ-тӗр, пӗлместӗп.
Анчах та эпӗ, хам ӗненнӗрен,
Ӗненекенсемпе пӗрле утатăп.
Ӗненекенсемпе ман чун-чӗре.

08.02.07

# ЫРĂ СУНАКАНĂМА

*Юрий Попова*

Пулнăччĕ, пулнăччĕ, пулнăччĕ вăхăт –
Йывăрччĕ питĕ мана!..
Ман таврара çăхансем явăнатчĕç,
Пăр хупласаччĕ чуна!..

Йывăрччĕ, йывăрччĕ, йывăрччĕ чăн та!..
Йывăрччĕ питĕ мана!..
«Чăт!» – терĕн эсĕ. «Кĕреш! – терĕн эсĕ. –
Турă вăй патăр сана!»

«Пĕл, – терĕн эсĕ, – усал вăл каварлă,
Çăткăн вăл, нĕрсĕр, тискер.
Эс – вăйлăрах! Ма тесессĕн т а с а эс.
Пул – кĕрешӳçĕ!.. Çĕнтер!..»

...Эп – парăнмарăм! Эп – хуçăлмарăм!..
(Ку вăл – «хитре сăмах» мар!)
Мĕншĕн тесессĕн, эс, Ырă Çыннăм,
Пултăн манпа юнашар!

27.11.06

## ÇĔНТЕРӲÇĔ

Тепĕр хут,
ниме пăхмасăр,
вăл
пуçне çĕклерĕ.
Тепĕр хут,
ниме пăхмасăр,
тăчĕ тӳрленсе.
Тепĕр хут,
ниме пăхмасăр,
юрă вăл пуçларĕ.
Тепĕр хут,
ниме пăхмасăр,
çиçрĕ хĕмленсе.
.............................
.............................
Тек нихçан та,
нихăçан та
усмĕ вăл пуçне!
Нихăçан та
тек вăл тăмĕ
чĕркуççи çине!
...Вăл
тинех...
х ă й н е çĕнтерчĕ...
Савăнăр, çынсем:
пур Пуласлăх –
пур пулсассăн
Ç Ĕ Н Т Е Р Ӳ Ç Ĕ С Е М!

01.11.06

## ПĔРНЕ, ВĂХĂТЛĂХА «ÇŶЛЕ КАЙНĂСКЕРЕ»

Эс шутлатăн пуль
ялан
çак пукан çинче
патша пек саркаланса
ларăп-ха тесе.
Эс шутлатăн пуль
ялан
санăн умăнта
йăпăлти этемккесем хĕвĕшĕç тесе.
Эс шутлатăн пуль
ялан
сан пуçу çине
ылтăн çумăрĕ çуса тăратех тесе.
Эс шутлатăн пуль
ялан ăнăçу сана
хăйĕн кĕмĕл сăпкинче
сиктерет тесе...

Йăнăшатăн эс!
Пĕлсем:
çак пукан çинче
пурпĕрех ĕмĕрĕпе
лараймастăн эс!
Йăнăшатăн эс!
Пĕлсем:
çак пукан çинчен
персе анăн та, сана
паллас çук çынсем.
Пуринчен ытла сана
паллас çук
паян

сан тавра, йăпăлтатса,
хĕвĕшекенсем.

Эс шутлатăн пуль
ялан
çак пукан çинче
патша пек саркаланса
ларăп-ха тесе...

26.07.05

x x x

Ан шутла
Пĕр эс кăна
Ывăннă тесе.
Ан шутла
Пĕр эс кăна
Ывăнан тесе.
Сар хĕвел те ывăнать –
Кунĕпе çиçсен.
Шухă çил те ывăнать –
Кунĕпе вĕрсен.

Ан шутла
Пĕр эс кăна
Тунсăхлан тесе.
Ан шутла
Пĕр эс кăна
Тунсăхлă тесе.
Кĕлчечек те тунсăхлать –
çумăр çумасан.
Çут шевле те тунсăхлать –
Читлĕхе хупсан.

28.01.07

х х х

Пĕчĕк туслăх та – пысăк пулăм.
Пĕчĕк туслăх та – пысăк пурлăх.

Эп ĕненетĕп ç а к н а!
Эп ç а к ă н п а пурăнатăп!

26.01.07

x x x

Мĕншĕн ман ăмсанмалла сана?
Мĕншĕн сан ăмсанмалла мана?
Эп пĕлетĕп: эсĕ – вăйлă ар.
Эс пĕлетĕн: эп те вăйсăр мар.

Мĕншĕн сан ютшăнмалла манран?
Мĕншĕн ман ютшăнмалла санран?
Саншăн ытлашши-и çĕн юлташ?
Маншăн ытлашши-и çĕн юлташ?

Иртсе кайĕ Хĕл те ак часах.
Иртсе кайĕ Çу та самантрах.
Чăн-чăн туслăх çеç иртмест – пĕрре
Кăвайт пек тивсессĕн чĕрере!

26.01.07

## ТУСĂМСЕНЕ. ШАНМА ПĂРАХМАНШĂН ТАВ ТУСА

Тахçан çырсаччĕ эпĕ те
Аван сăвăсемех.
Çырма – çыратăп халĕ те,
Анчах – кăшт хĕнтерех.

Е ватăлма пуçларăм-ши?
Тен, ватăлап та пуль.
Пĕр шутласан, кĕскех те мар
Эп утса тухнă Çул.

Ялан пĕлсе утмарăм çав.
Утмарăм çав пĕлсе.
Сахал ĕçлерĕм пулĕ çав,
«Йăлтах – малта!» тесе...

Çапах та çырнă, çырнă эп
Аван сăвăсемех!
Вĕсем унччен те кирлĕччĕ.
Паян, тен, кирлĕрех?..

Вĕсем – çакна шанатăп эп –
Паян та такама
Тӳсме, чăтма параççĕ вăй.
Хистеççĕ п у р ă н м а!

...Тен, ӳлĕмрен те çырăп-ха
Эп лайăх сăвăсем.
Ма çырас мар – çырасчĕ-ха,
Эп – Сăвăç-çке, туссем!

15.03.06

## ЧИМ!..

Чим!.. Усаллантăм мар-и эп?!

Усалланап та пуль...
Ара, тĕнчи те ку чухне
хаяр. Чăнах – хаяр!
Ара, куçна уçмассерен
сана такам юнать,
сана такам, йăл-йăл кулса,
темтепĕр шантарать.
Ара, сана хăв юлташу
виç кĕмĕлле сутать.
Вара сан çутă шанчăку,
ӳксе, чăл-пар ванать...

Анчах
тĕнчи паян çеç мар
хаяр, ытла хаяр.
Анчах
сана паян çеç мар
юнаççĕ такамсем.
Анчах
сана паян çеç мар
тем шантарать такам.
Анчах
сана паян çеç мар
сутаççĕ «тусусем»...

...Чим!.. усаллантăм мар-и эп?!
Хуравласам, чĕрем!

27.01.07

x x x

Мана эс ăнланасшăн-и?..
Тархасшăн!
Ак – куллăм ман, ак – кăмăлăм, мана
тахçантанпах канăç паман тĕллевĕм.
Ак – лăплансан та лăпланман чĕрем.

Ак – ман асапăм, шанчăкăм, ултавăм.
Ак – ман ÿпкевĕм, тунсăхăм, чуна
çÿлтен-çÿле çĕклен таса хĕлхемĕм.
Ак – юррăм ман... Тархасшăн – итлесем!

...Мана эс ăнланасшăн-и?
Эп хам та
тем пек ăнланнă пулăттăм хама.
Тем пек ăнланнă пулăттăм хама эп –
пулнах пулсассăн майĕ ăнланма.

13.07.07

x x x

Эп кăлăхах сана, Шăпам, ятлатăп
Хăшпĕр чухне, чун тăвăлса çитсен.
Эп ытлашши нумай санран ыйтатăп,
Ытла та пысăк манăн тĕллевсем.

Эп Тĕнчене тĕпрен улăштарасшăн.
Эп çиçтересшĕн Хĕвеле ялан.
Вилмесĕр эп çак Çĕр çинче пурнасшăн.
Турă пулма та кăмăлăм пур ман.

Çапла, çапла – чуна уçса парсассăн –
Турă пулма эп пĕртте хирĕç мар!
Тен, кам пĕлет, тата кăшт тăрăшсассăн...
Тата кăштах тивсен асапланма?..

...Куратăн-и, Шăпам, епле эп çăткăн!
Епле мăнкăмăллă, епле айван!..
Эп – канăçне çухатнă пĕчĕк каткă –
Пуласшăн пысăкрах ват юманран.

Çапах та эп пĕлетĕп çырлахма та
Мĕн пуррипе, хама мĕн панипе.
Эп – чи пахи – пурнатăп! Пурăнатăп!
Мĕн танлашайĕ çакă Телейпе?!

Эп – пурăнатăп! Эпĕ – пурăнатăп!
Кăкăр тулли сывлатăп савăнса!
Тавах, Шăпам!.. Эп пуçăма таятăп
Сан умăнта, ÿпкевĕме манса!

28.01.07

## ХЫРАЙ ЁНЕЛ МАСАРĔНЧЕ

Хырай Ёнел масарĕнче –
Хĕрес те палăк,
Палăк та хĕрес...

... Кăна – паллатăп...Ырă çынччĕ питĕ...
Ку тата кам?
Ку – пурнаймарĕ... Çамрăклах...
Мĕн, ку та вилнĕ-и?! Хăçан?!

Кунта, ак, ман тăванăмсем...
Ак – Мĕкĕте кукка... Уля инке...
Кунтах, ак, ман Униç аппам –
Чунтан юратнă çыннăм...

Ытла та шăп.
Çӳçентерет
Чун-чĕрене ку шăплăх.

Чи пахине,
чи кирлине
уçса парать ку шăплăх.

08.01.2008

x x x

Каçар йĕркеллĕ савайманшăн
Сана эп иртнĕ каçхине.
Те уйăх питĕ шухă пулчĕ –
Шеллевсĕр тăкрĕ çутине.

Те çăлтăрсем пĕр именмесĕр
Тинкерчĕç манăн кантăкран...
Ытла нумай сана эп кĕтнĕ,
Кĕтсе илессине сунман.

Ялан çапла – чунтан кĕтетĕн,
Кĕтсе илетĕн те, хăвна
Ниçта хума эс аптăратăн.
Сая яратăн вăхăтна.

Леш ăçтиçукĕ чарăнмасть вăл.
Ăна май çук тытса чарма.
Тин çеç çурта çутсаччĕ эпĕ –
Çурта пăрахрĕ ялкăшма.

Каçар йĕркеллĕ савайманшăн...
Ку вăл – пĕр каçлăха кăна...
Ытла та уйăх çутă пулчĕ...
Ытла та кĕтнĕ эп сана...

09.01.08

## АЛĂК

Эп – уçатăп.
Эс – кĕретĕн.
Эп ку алăка
Çĕр пин хут уçма та хатĕр
Саншăн, чун савни!

Шăп та лăп
Пин çул эп кĕтнĕ
Çакă саманта!
Эп ĕненнĕ: эс килетĕн
Пурпĕр, чун савни!

Сивĕре
Сана эп кĕтнĕ.
Кĕтнĕ тĕттĕмре.
Эпĕ пĕлнĕ: эс килетĕн
Пурпĕр, чун савни!

Эп – уçатăп.
Эс – кĕретĕн...
Кĕр, савниçĕм, кĕр!
Юрату Уявĕ пултăр,
Чун савни, çак çĕр!

01.03.99

x x x

Ай-хай, ытла та ырă
Çак сивĕ, çиллĕ каç!..
Эс çеç манпа, чĕкеçĕм,
Тата кăштах калаç!..

Хăямата – сив çумăр!..
Хăямата – сив çил!..
Ман çуммарах çеç эсĕ,
Пĕртенпĕрскерĕм, кил!..

Килсем!.. Сана эп кĕтнĕ!
Килсем çывăхарах!
Калаç манпа, хĕвелĕм,
Калаç тата кăштах!

Хăямата – çил-тăвăл!
Хăямата – пăр-юр!..
Паян телейлĕ эпĕ!
Паян ман Эсĕ пур!

23.10.06

## ПОЭТ ЮРАТӐВӖ

е ирӗксӗртен тӳрре тухни

– Сан,мӗн, урӑх хӗрарӑм, пур-им?
– ...Ҫапла, эп тек пытараймастӑп, пур.
– Хитре-и вӑл, ҫав эп пӗлмен хӗрарӑм?
– Хитре ҫеҫ мар! Вӑл... Вӑл ытлашшипех хитре!..
– Вӑл ҫамрӑк-и?
– Вӑл ватӑлмасть нихҫан та!
– Ан сӳпӗлтет!.. Хӗвел те ватӑлать!
– Хӗвел, тен, ватӑлать те пуль...
– ...Эс... юрататӑн-и ӑна?
– Ӑна-и?.. Ӑна...
– Эп унсӑр пӗр самант та пурнаймастӑп!
– Апла иккен... Эс ан шутла – эп макӑрмастӑп... эп...
– Эп сансӑр та – ӗнен! – пурӑнаймастӑп!
– ...Мӗн ятлӑ вӑл?.. Ятне хуть каласам...
– Пӗлетӗн-и, ун ячӗ... хӑйӗн пекех илемлӗ!..
...Поэзи теҫҫӗ ҫав Пирӗштие!..
Поэзи теҫҫӗ ҫав Ӑшҫунтармӑша!..

06.06.07

## САЧЧЕМ ТАК САСАРТĂК?..

*«Саччем так сасартăк?»*
Шўтлеме юратакан пĕр
чăваш калани

Чăнах та – саччем так сасартăк?
Пулатчĕ – хуллен, ерипен...
Кĕпи те хăйех хывăнатчĕ,
Ытти те хăйех – майĕпен.

Малтан çывăхрах паллашма та
Пулатчĕ – сĕтел хушшинче.
Пулатчĕ чунтан калаçмашкăн
Çурхи çутă уйăх çинчен.

Саччем так сасартăк? Илтессĕм
Килет ман санран ăш сăмах ...
Ăçта эсваскатăн каяннăй?!
Тăхта! Ан васка! Эп – хамах!

Тăхта, ан васка! Е курман-и,
Курман-им эс ман пеккине?
Ну мĕн хытса кайрăн эс, тусăм?
Пикен, пуçăнсам хăв ĕçне!

Чăнах та саватăн-и эсĕ?
Эс хатĕр-и маншăн вилме?
Асту, эс мана улталаймăн!
Манпа юрамасть шўтлеме!

... Саччем так сасартăк? Капла та
Пулаттăмчĕ кĕçĕр эп сан.
Мĕнех, халь вара, çут хĕвелĕм,
Çунтар эс мана, çунтарсам!

x x x

Хăйех килет, ак, вăл пуҫа
Ҫав Шухăш, ҫав Сăнар...
Эс, чи пахи, ялан манпа
Пулсамччĕ юнашар.

Эс, чи пахи, ĕнен мана.
Тата, паллах, ăнлан.
Эпир санпа ку таранччен
Пĕрле сахал утман.

Эпир санпа ку таранччен,
Хăш чух халран кайса,
Илем шыранă ир те каҫ,
Тĕнче ҫинчен манса.

Эпир санпа Илемлĕхе
Пуҫ ҫапнă. Илемрен
Тата мĕн пултăр асамли
Ҫак Ҫутă Тĕнчере?

Ҫапла, пур Шухăш, пур Сăнар.
Пур Эсĕ. Эпĕ пур.
Тата пур ман сукмак ҫинчи
Шап-шурă-шурă юр...

23.10.06

x x x

Çăлтăрăн – ялкăшмалла.
Сан – мана юратмалла!

Хурăнăн – кашламалла.
Сан – мана юратмалла!

Шăпчăкăн – юрламалла.
Сан – мана юратмалла!

Тинĕсĕн – хумханмалла.
Сан – мана юратмалла!

Сан – мана юратмалла!..
Ман-и? Ман – савăнмалла!

07.06.07

## ĂНА КУРСАН...

Илемсĕр вăл. Анчах та ырă.
Сасси ун çепĕç. Куçĕнче
Тапса-çиçсе тăрать ăшпиллĕх.
Пур вăрттăнлăх ун куллинче.

Илемсĕр вăл... Чăнах – илемсĕр...
(Çакна вăл хăй те ăнланать).
Анчах та темшĕн, темшĕн, темшĕн
Ăна курсан... чун савăнать!

30.10.06

x x x

Эс ыйтнине сана эп параймастăп.
Ытла нумай ыйтатăн эс манран.
Эп –Турă мар-çке! Турă мар-çке эпĕ!
Эп пулаймастăп вăйлăрах хамран!

Эп – Турă мар. Çакна ăнлан та чарăн
Манран ыйтма манран килменнине.
... Хăв ыйтмасан та пурпĕрех эп парăп,
Сана эп парăп, парăп ыттине.

13.07.07

x x x

Эп сана «юрататăп» тесе каламанччĕ.
«Юрататăп» сăмах вăл – арман чулĕ пек.
Кашнинех вăй паман çав чула çĕклемешкĕн,
Май паман ăнтăлмашкăн телей çулĕпе.

Эп сана «юрататăп» тесе каламанччĕ.
Тен, каласшăн та пулнă, анчах – калайман.
«Юрататăп» сăмах вăл – ирхи сывлăм евĕр.
Ялкăшать те кăштах, пăрахать ялкăшма.

Эп сана «юрататăп» тесе каламанччĕ...
Каламанччĕ сана «юрататăп» тесе...

31.01.08

## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

Тин çеç эс тухнă мунчаран.
Çӳçне туратăн эсĕ.
Сан çӳçӳнтен сар урайне
Çут тумламсем ӳкеççĕ.

Эс питĕ тимлĕн тĕкĕрти
Хăв сăнарна сăнатăн –
Эс киленетĕн хăвăнпа...
Эс пĕтĕмпех куратăн...

Кунта çĕн пĕркеленчĕк пур...
Кунта – йăлтах йĕркеллĕ...
Пĕтĕмĕшле илес пулсан,
Илемлĕ-ха, илемлĕ!..

...Пĕтĕмĕшле илсен çеç мар! –
Эс унсăрах илемлĕ!
Турамăш пек таса эс халь!
Турамăш пек илемлĕ!

Тин çеç эс тухнă мунчаран...
Çӳçне туратăн эсĕ...

01.06.07

# ЫЙХĂ ВĂЙĔ

Кĕрлет тĕнче!
Ай еплерех кĕрлет!..
Тĕнче пĕтет теç.
Те чăнах пĕтет?..
Пĕтсен – пĕтет.
Ман - çывăрас килет!
Ман – питĕ-питĕ çывăрас килет!..

05.10.07

# САВӐНӐÇ

Кĕтменччĕ те туманччĕ те,
Шанманччĕ, ĕненменччĕ...
Шăпам мана кун пек Парне
Парассине кĕтменччĕ.

«Мĕнле Парне?! Мĕнле Парне?!» –
Теетĕр пуль эсир халь.
Эп мĕншĕн пит телейлине
Пĕлесшĕн пуль эсир халь.

Мĕнле Парне... Мĕнле Парне...
Кăна эп çеç пĕлетĕп.
Тавах, Шăпам! Санран татах
Эп çĕн Парне кĕтетĕп.

22.10.06

х х х

Эп куратăп та, эс ăнланмастăн
Çак самант сана  м ĕ н  панине.
Эс, мĕн, суккăр-и, е пит айван-и?
Ма курмастăн эс  э п  курнине?

Ак – Телей... Еплерех вăл черченкĕ!..
Еплерех çупăрлать вăл сана!..
Санăн çеç, санăн çеç вăл пуласшăн...
Мĕншĕн эс хăвалатăн ăна?

Эс хăвна, хăвна çеç юрататăн.
Эс шутлан: пĕтĕм пурнăç – малта.
Телейӳ... Телейӳ  сан – кӳренчĕ.
Телейӳ сан ăнланчĕ йăлтах.

Телейӳ сан кӳренчĕ. Ытла та
Вăл пуласшăнччĕ санăн кăна.
Эп куратăп та, эс... юратмастăн...
Юратсах юратмастăн хăвна.

01.02.08

x x x

Пулать те-çке, пулать те-çке Хĕрарăм!..
Пĕрре пăхса чунра вăл вут чĕртет.
Пĕлетĕн эс: вăл сан нихçан та пулмĕ.
Пĕлетĕн эс: вăл сана мар кĕтет.

Пĕлетĕн эс... Эс пĕтĕмпех пĕлетĕн:
Турри çырман!.. Вăл – урăххин!.. Çавах...
Çавах та эс пĕр унпа çеç пурнатăн...
Те ăслă эс, те ăслă... те ухмах?..

Пулать те-çке, пулать те-çке Хĕрарăм!..

01.06.07

x x x

Юрату...
Юратуран кăна тăмасть!

Çутă...
Çутăран кăна тăрать-им?

Çутă
Çутăран кăна тăмасть!

Çутăра
Пур
Иртнĕ каç мĕлки.
Çутăра
Пур
Çитес каç йыхравĕ...

Юрату
Юратуран кăна тăмасть.

27.01.07

## ТЕ ЧӐНАХ ТА...

Те чӑнах та юратать,
Те юратнӑ пек тӑвать?..

Аптӑратӑп эп унпа...

Юратать-ши?
Юратмасть!
Тем тесен те юратмасть!
Эп – кӗтетӗп. Вӑл – килмест.
Эп – чӗнетӗп. Вӑл – илтмест.
Эп – вӗҫетӗп. Вӑл – вӗҫмест...
Юратмасть вӑл, юратмасть!..

Юратмасть-ши?..
Юратать!
Тем тесен те юратать!
Чӑр пӑхать те куҫӑмран,
Йӑл кулать те – ман чӗре
Ҫут хӗвел пек хӗмленет,
Ман каллех вӗҫес килет!..

Юратать-ши?
Юратмасть!
Юратмасть-ши?
Юратать!
Тем тесен те юратмасть!..
Тем тесен те юратать!..

20.05.02

x x x

Кун пек юрату та пулать-шим?
Кун пек те пулать-шим савма?..
Çулсем иртнĕçем ытларах эп
Саватăп... хам мăшăрăма.

Çулсем иртнĕçем ытларах эп
Турра тав тăватăп – тахçан
Санпа, ман Таса Пирĕштийĕм,
Тĕл пулнăшăн эп ăнсăртран.

Эп халь ĕненетĕп, пĕлетĕп:
Телей вăл – ялан юнашар.
Ăна к у р м а çеç пĕлмелле-мĕн,
Ăна ш ы р а м а кирлĕ мар.

Çулсем иртнĕçем ытларах эп
Саватăп хам мăшăрăма.
Кун пек юрату та пулать-ши,
Кун пек те пулать-ши савма?

05.01.01

# АНАТКАСРА

*Олег Мустаева*

Анаткасра паян ача çуралнă.
Кĕрлет-шавлать телейлĕ Анаткас!
Ăçтан, епле хавасланмасăр чăтăн –
Ача сасси халь янрамасть час-час.

Анаткасра паян ача çуралнă.
Çуралнă ывăл – кĕтнине кура.
Кăкăр сĕтне ĕмет тет ывăнмасăр,
Кулса кăна выртать тет сăпкара.

Анаткаса вăл,тен, чапа кăларĕ...
Тен, Кăйкăр пек çĕкленĕ тӳпене...
Ăçтан пĕлен, тен, генерал вăл пулĕ...
Тен, çĕр çинчех вăл тупĕ Телейне...

Анаткасран тухманччĕ паллă сăвăç.
Ăсчах тавраш та халиччен пулман...
Ку вăл тем мар. Йăлт пулĕ, пурте пулĕ –
Тĕнчи тӳлек те тăнăçлă тăрсан.

Йăлт пулĕ!.. Эп шанатăп – пулĕ,
Анаткаса ыран е тепĕр кун
Ача сасси телей парнелесессĕн,
Анаткаса килсессĕн Çĕнĕ Чун!

28.01.07



*Эп кунта ялан вунҫиччӗре...*

## ТУТАРСТАН ХАЛĂХ ПОЭТНЕ РЕНАТ ХАРИСА

Каллех пĕрле эпир, юлташăм.
Каллех эс – ват Шупашкарта.
Каллех кулатăн эс йăвашшăн,
Тусусене савса чунтан.

Эс иртнине аса илетĕн...
Хавхаланса та пăлханса
Каллех эс Ухсая мухтатăн,
«Кĕлпук мучишĕн» тав туса.

Хусанкайпа та эс тĕл пулнă.
Паян та Сăвăç умĕнче
Пуçна таян эс пархатарлăн.
Эс халь те ун ытамĕнче.

Каллех пĕрле эпир, юлташăм.
Пĕрле: Сарпи те Сементер...
Пурхил сана, ав, ыталасшăн.
Айташ та, ав, пит хĕпĕртет.

Пире Поэзи пĕрлештерчĕ.
Пире Илем парать вăй-хал.
Тăван чĕлхемĕр пурăнсассăн,
Эпир юлмастпăр тăлăха.

Епле сана, Ренат, юратмăн?
Сан ăшă, çепĕç куллунта
Çиçсе-тапса тăрать ыр кăмăл.
Мĕн чухлĕ ăс сан куçунта!

Тутарстанра – Чăваш Элчи эс.
Тутар Элчи – Чăваш Енре.
Тавах сана, Ренат-юлташăм,
Паян та ĕмĕр-ĕмĕрех!

01.06.07

## ХЫРАЙ ЁНЕЛ ЧӐВАШЁСЕНЕ – ПУҪӐМА ТАЙСА

Эп сире ҫӗнни темех калаймӑп.
(Пур-ши вӑл,ҫӗнни, ҫак тӗнчере?)
Сирӗнсӗр хӗвел те маншӑн тӗксӗм.
Сирӗнсӗр эп тӑлӑхпа пӗрех.

Тинӗсре ишетӗп-и, е ҫӳллӗ
Тусемпе пуплетӗп-и, – ялан
Ман асра – Кӗтне те тӑван ялӑм.
Ман асра – ҫут сывлӑмлӑ ҫаран.

Ман асра эсир – ансат та аслӑ,
Ырӑ та ӗҫчен ентешӗмсем.
Пурӑнма мана вӑй-хал параҫҫӗ
Сирӗн ҫутӑ, ӑшӑ куллӑрсем.

Тӗнчере нумай илемлӗ тӑрӑх.
Чаплӑ ял нумай ҫак тӗнчере.
Пӗрре ҫеҫ Хырай Ёнел, мӗн тӑвӑн!
Ҫӗр ҫинче чӑнах та вӑл пӗрре!

Эп кунта ирӗклӗрех сывлатӑп.
Эп кунта утатӑп ҫирӗпрех.
Мӗн пурри кунта – йӑлтах вӑл манӑн.
Эп кунта ялан – вунҫиччӗре!

...Эп сире ҫӗнни темех калаймӑп.
(Пур-ши вӑл, ҫӗнни, ҫак тӗнчере?)
Сирӗнсӗр хӗвел те маншӑн тӗксӗм.
Сирӗнсӗр эп тӑлӑхпа пӗрех.

08.02.07

x x x

Уяв вĕçленчĕ … Тăсăлать уяв.
Мĕн-ма тесессĕн – пурнăç тăсăлать.
Мĕн-ма тесессĕн – ялкăшать хĕвел.
Мĕн-ма тесессĕн – ман чĕре юрлать.

Уяв вĕçленчĕ – тăсăлать уяв.
Епле илемлĕ çак асамлă ир!
Епле илемлĕ çак кĕрен тӳпе!
Епле телейлĕ, тусăм ман, эпир!

Уяв вĕçленчĕ – тăсăлать уяв!
Эп тав тăватăп, Турăçăм, сана
Çак Уявра эп пулнăшăн хăна.
Эп пулнăшăн çак Уявра хăна.

Уяв вĕçленчĕ … Тăсăлать уяв ...

20.02.07

## ТĔЛЛЕВ ÇЕÇ ПУЛТĂР

Çук халăха та
пур тума пулать.
Пур халăха та
çук тума пулать.

Тĕллев çеç
пултăр.
Пултăр çеç
тĕллев.

22.03.06

## ХĂРУШĂ!

Кун пек пурăнма юрамасть!
Эпир тĕрĕс мар пурăнатпăр!..
Эпир Пуласси енне мар,
Эпир пĕтесси еннелле ăнтăлатпăр!..

Эпир – улталаннăскерсем.
Пире çут тĕллевсĕр хăварчĕç.
Пире, пĕтсен-пĕтчĕр тесе,
Никам тухайман чăтлăха кĕртсе ячĕç.

Утатпăр эпир тĕттĕмре.
Çӳлте çăлтăрсем те çунмаççĕ.
Хыçра тискер кайăк улать.
Халран кайнисем пулăшу тархаслаççĕ.

Чакать пирĕн йыш чакнăçем.
Эпир кирлĕ мар никама та.
Пире те текех кирлĕ мар
Ку çул та... Мала чĕнекен Йыхăрав та...

...Кун пек пурăнма юрамасть!..
Хăрушă!.. Ытла та хăрушă!..

15.05.06

## ПЕПКЕ

Пысăк ĕçсем тума çуралнă
çак пĕчĕк паттăр,
çак пепке.
Кăшт тимлĕрех кăна пăхсамăр:
мĕн чухлĕ ăс ун куçĕнче!

Кун пеккисем
час-час килмеççĕ
çак вĕçсĕр-хĕрсĕр тĕнчене.
Анчах кун пеккисем килсессĕн,
урăхларах çиçет тĕнче.

Кăшт тимлĕрех кăна пăхсамăр:
мĕн чухлĕ вăй ун куçĕнче!
Куратăп эп:
вăл, тем тесен те,
хăйне мĕн кĕтнине пĕлет!..

09.01.2008

x x x

*Сарӑмсӑр вилнӗ Виталий Гордеевӑн,*
*Чӑваш халӑх артистне асӑнса*

Тепӗр Юрӑççӑр юлчӗ ман халӑхӑм.
Тепӗр Шӑпчӑк сас памӗ текех.
Чӗрене вырнаçмасть манӑн хурлӑхӑм.
Эпӗ хам та халь тӑлӑх пекех.

«Питӗ шел, – тет пӗри, – упраймарӑмӑр...
Ун пек юрӑç сахал ку чухне».
«Хаклаймарӑмӑр-çке, хаклаймарӑмӑр!..» –
Тет тепри, ав, шӑлса куççульне.

«Турӑран хӑрамашкӑн пӑрахрӑмӑр, –
Теççӗ, ав, пӗрисем, сӑхсӑхса, –
Çавнашкал ӗнтӗ эс, ӑраскалӑмӑр,
Çут тӗнче кайрӗ йалт пӑтранса».

...Чӗрене вырнаçмасть манӑн хурлӑхӑм.
Эпӗ хам та халь тӑлӑх пекех.
Тепӗр Юрӑççӑр юлчӗ ман халӑхӑм.
Тепӗр Шӑпчӑк сас памӗ текех.

21.07.05

## КУ ПУÇЛĂХ

Тата мĕнпеле тĕлĕнтерĕ ку пуçлăх?
Тата мĕн кăтартĕ пире малашне?
Кантурăмăр пирĕн халран кайса çитрĕ.
Пуçне уснă халăх çыртать чавсине.

Кантурăмăр пирĕн çурхи вĕлле пекчĕ.
Мала тинкереттĕмĕр çут шанчăкпа.
Кашнийĕ ĕçлетчĕ ик çыншăн, виç çыншăн...
Утаттăмăр харсăррăн аслă çулпа.

Унтан çак этем кантура кĕрсе тăчĕ.
«Çитет! – терĕ вăл, - кивĕлле пурăнса!
Сире эп, туссем, çăтмаха ертсе кайăп!
Ыр курăр – мана пуçлăха суйласан!»

...Этемĕ – пăхма – ăслă-тăнлă, йĕркеллĕ.
Этемĕ – пăхмашкăн – маттур та хастар...
Кантур хавхаланчĕ, хускалчĕ, тапранчĕ... –
Эпир ыр курса пурăнма хирĕç мар.

.............................................................................
.............................................................................

...Эпир ыр курса пурăнма хирĕç марччĕ
Эпир хирĕç марччĕ те çав – тамаша! –
Кунсем çиçсе иртрĕç, çулсем вĕçсе иртрĕç...
Çăтмах вырăнне килсе çитрĕ нуша.

Эпир кантурта халь кулма та хăратпăр.
Хăратпăр тăма та хăратпăр ларма.
Хуçамăр сиссессĕн, тивет паттăрскерĕн
Вĕри çатмана чĕлхипе çуллама.

Хуçамăр кантуршăн çунать кунĕн-çĕрĕн!..
Хуçамăр канмасăр ĕçлет тар тăкса!..
Часах ак телей çумăр пек çума пуçлĕ –
Тата кăшт тӳссен те тата кăшт чăтсан!

Хуçамăр – хăватлă! Хуçамăр – мухтавлă!..
Тĕнче тулли тус пирĕн хаклă хуçан!..
(Çавсем халь пире пурăнма вĕрентеççĕ.
Çавсем тайтараççĕ пире халь пуça).

.................................................................

...Этемĕ – пăхма – ăслă-тăнлă, йĕркеллĕ.
Пире, тен, савать те пуль вăл чĕререн...
Тата хăçанччен тĕлĕнтерĕ ку пуçлăх?
Тата мĕн кăтартĕ ку пуçлăх пире?..

21.04.06

## ШУРЛĂХ
### Ода

Мухтав сана, ман шурлăхăм-телейĕм!
Епле мăнаçлă эс, епле хитре!
Эп сансăр пĕр самант та пурнаймастăп.
Эс, шурлăхăм, ялан ман чĕрере.

Епле шăршу сан явăнать асамлăн!
Епле хаваслă санăн шапусем!
Вĕт хурăнсем хастарлăн кармашаççĕ
Тӳпенелле «пурнасчĕ-ха!» тесе.

Ăçта тата кун пек илем пулайтăр?
Ăçта кун пек выляччăр шевлесем?..
Телейлĕ эп – эп шурлăхра пурнатăп,
Хам шурлăхра пурăннине пĕлсе.

28.09.07

## ЯЧĔШĔН

Ячĕшĕн
ирттерчĕç пуху.
Ячĕшĕн
сăмах каларĕç.
Ячĕшĕн
тимлĕ итлерĕç.
Ячĕшĕн
йăлт ăнланчĕç.
Ячĕшĕн
такама ятларĕç.
Ячĕшĕн
такама мухтарĕç.
Ячĕшĕн
анасларĕç.
Ячĕшĕн
алă çупрĕç.
Ячĕшĕн
сасăларĕç.
Ячĕшĕн
такама суйларĕç.

...Кĕрекере
ячĕшĕн мар кĕрлерĕç!..

Ячĕшĕн
ирттерчĕç пуху.
Ячĕшĕн!
Ячĕшĕн
ирттерчĕç пуху!..
Ячĕшĕн!..

01.03.06

# РАÇÇЕЕ. ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМА

Кама
юрасшăн эс, Раççей?!
Кама
эс килĕшесшĕн?!
Кам умĕнче
мĕскĕнленсе
эс ĕмĕр ĕмĕрлесшĕн?!

Санран кулаççĕ куççăнах.
Сан ыр ятна варлаççĕ.
Санран кулса та йерĕнсе,
сан питӳнтен сураççĕ.

Кама
юрасшăн эс, Раççей?!
Кама
эс килĕшесшĕн?!

Америка
тусу-и сан?
Тусу-и сан
Европа?..

Америка
сан тусу мар!
Сан тусу мар çав çăткăн!
Вăл çапса хуçĕччĕ сана,
вăл касса ваклĕччĕ сана,
вăл çăтса ярĕччĕ сана!..
Анчах пырши çинçе ун!..

Европа?!
Курнă эп ăна.
Вăл – тутă, питĕ тутă.
Пурне те ăс парать çавскер,

пуриншĕн те вăл – Турă,
вăл – чи ăсли, чи тĕрĕçси:
Европа пек йăлт пулăр!..

Анчах... шанмастăп эп ăна –
Европăна – шанмастăп!
Хăйне кăна вăл юрататъ,
хăйне кăна савать вăл!..

Кама
юрасшăн эс, Раççей?!
Кама
эс килĕшесшĕн?!

Тен, эс хăвна
ĕнер кăна
сутнисене
юрасшăн?!
Сана, тен, сутрĕç
ăнсăртран?!
Сана, тен, ӳлĕм сутмĕç?!

.........................................

Çĕкле пуçна, çĕкле,
Раççей!
Çитет – кĕлмĕçленсе!
Çитет пире – чĕркуçленсе!
Çитет – мĕскĕнленсе!

14.03.06

# У

Эп «вăл» теместĕп.
Ялан эп тетĕп – «у»:
«Епле чипер у!»
«Мана савать-ши у?»

Юрлать ман чунăм,
«У» тенине илтсен.
«У» – ман ачалăх,
Ачалăхри туссем.

«У» – ман тавралăх,
Ешерекен хирсем.
«У» – ман хастар та
Мăнаçлă ентешсем.

...Мĕнле пурнать у –
Ман савнă Анат Ен?
Пĕлеп: шутлать у,
Шутлать у ман çинчен.

Шутлатăп эп те...
Тăван çĕршывăм у –
Чи юратни у,
Темрен хакли те – у.

Эп «вăл» теместĕп.
Ялан эп тетĕп – «у»:
«Мĕнле пурнать у?»
«Мана савать-ши у?..»

30.01.08

x x x

Хамăра хамăр тĕп тăватпăр.
Хамăра хамăр, чăвашсем!..
Е Утнă Çулĕ вăрăм пулчĕ?
Е халран ячĕç Тăвăлсем?

Хамăра хамăр тĕп тăватпăр,
Хамăра хамăр, чăвашсем!..
Çук пирĕн – пĕрлĕх. Çук – тăванлăх.
Çук пирĕн харсăр паттăрсем.

Çук пирĕн Çул. Тĕллев çук пирĕн.
Çук пирĕн мул. Пур пек мула
Çич ют хурахĕ хăйĕн турĕ,
Пиртен лĕх-лĕх кула-кула.

Тек кирлĕ мар пире Чĕлхемĕр –
Чăваш Чĕлхи – тек кирлĕ мар!..
Эпир тăван Шупашкарта та
Хăратпăр чăвашсем пулма...

Тек кирлĕ мар пире хастарлăх.
Çул панă халь нишлисене.
Хастарринче тăшман куратпăр
Эпир. Сутатпăр пĕр-пĕрне.

Çапла: сутатпăр та таптатпăр
Пĕрне-пĕри эпир!.. Пиртен
Тĕнче каçса кайса кулать-тĕр,
Пиртен – ухмах чăвашсенчен!..

Хамăра хамăр тĕп тăватпăр,
Хамăра хамăр, чăвашсем...

07.03.06

## ТЕМ ПЕК ЛАРТСА ПАРАСЧĔ ПАЛĂК

Пит пысăк пуçлăхра ларать вăл.
«Çĕклет» чăваш ятне-сумне.
Кашни сăмахĕ унăн – ылтăн.
Çу сĕрнĕ тейĕн чĕлхине.

Сăмахĕсем ун, чăн та, ылтăн.
Сăмахĕсем ун – пыл та çу.
Тем пек лартса парасчĕ палăк
Ăна. Унран... у с с и й ĕ çук.

Çапла – унран курман-ха усă
Ман халăх пач та халиччен.
Хăйне кăна сават çав пуçлăх.
Çук х а л ă х унăн чĕринче.

Йăлтах пур ун: пур влаç, пур мулĕ...
Сăмахĕсем ун – пыл та çу.
Мăнтарăна шеллетĕп эпĕ...
Мĕн-ма тесен, ун... ним те çук.

15.07.2006

x x x

Кама айăплас çак инкекшĕн, çак тертшĕн?!
Кама айăплас çак сураншăн, кама?!
Эпир кун пек мар пурăнасшăнччĕ, тусăм.
Эпир ку çулпа тивĕç марччĕ утма.

Эпир урăххишĕн санпа кĕрешсеччĕ.
Илтетĕн-и эс – урăххишĕн пачах!
Эпир ун чухне ĕненеттĕмĕр питĕ:
Ыталĕ пĕртанлăх пурне те часах.

Пĕртанлăх... Тăванлăх... Хĕвеллĕ пуласлăх...
Ăçта халь вĕсем – пирĕн çут ĕмĕтсем?!
Йăлтах сирĕлми тĕтрепе хупăрланчĕ.
Сӳнсе тĕксĕмленчĕç кăвар чĕресем.

Кама айăплас çак инкекшĕн, çак тертшĕн?..
Кама айăплас çак асапшăн, кама?!
Эпир ку çулпа тивĕç марччĕ утмашкăн.
Эпир тивĕç марччĕ кун пек пурăнма.

02.04.07

# АН ХĂЙĂР ХУРЛАМА МАН ХАЛĂХА!

*Чăвашсем – кĕвĕç чунлă, усал,*
*туслă мар халăх.*

Илтнинчен.

Ан хăйăр хурлама ман халăха!..
Эсир малтан çĕкленĕр ун шайне,
Эсир малтан вăл тӳснине тӳссемĕр,
Туйса курсамăр унăн Асапне!

Эсир малтан курсамăр ĕçлесе,
Ман халăхăм ĕçленĕ пек. Тарпа
Пĕрре кăна тăван çĕре шăварăр!
Пĕрре çеç утăр Çĕнĕ Касăпа!

Эсир малтан тăвăлсене çĕнсе,
Вăй-хал пĕтсен те утăр малалла,
Ман халăх утнă пек, ун чух, пĕлетĕп,
Сăмахăр сирĕн пулĕ урăхла!

Эсир малтан пĕр ĕмĕт-тĕллевпе
Тухса курсамăр Аслă Нимене,
Ман халăх тухнă пек, вара ăнланăр
Эсир чăн-чăн тăванлăхăн хакне!

Малтан эсир юратăр Пурнăçа –
Ман халăхăм юратнă пек!.. Уйра
Эсир Лаштра Юман-Атте курсамăр,
Тытсамăр Алтăр-Çăлтăр аллăра!..

Ан хăйăр хурлама ман халăха!
Ан хăйăр хурлама ман Халăха!

23.03.06

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИНЕ –
## ЧЕЧЕК КĂШĂЛĔПЕ ПĔРЛЕ

Сӳнмен-ха Чăвашлăх Чăваш чĕринче!
Çунать-ха çак Çулăм, çак Вут хĕмленсе!
Хистет вăл çаплах тăрăнса ӳкиччен
Мала ăнтăлма, Ыррине ĕненсе.

Сӳнмен-ха Чăвашлăх Чăваш чĕринче!..
Ăна сӳнтерме ĕмĕтленнĕ пайтах.
Хура йывăр пĕлĕт кайман ун çинчен –
Анчах та вăл çиçнĕ, хĕмленнĕ çавах!

Сӳнмен-ха Чăвашлăх Чăваш чĕринче!
Паян та ăна хĕмленме çăмăл мар.
Куратăп: çук канлĕх çич ют куçĕнче –
Ытла та вĕри вăл, çак Вут, çак Кăвар!

Сӳнмен-ха Чăвашлăх Чăваш чĕринче!
Çунать-ха çак Çулăм, çунать ялкăшса!
Хистет вăл пире юлашки самантчен
Мала талпăнмашкăн Вут-Кайăк пулса.

04.01.07

## МАРГАРИТА КАБЕТОВАНА – ПĔРТЕНПĔРСКЕРĔМĔРЕ

Ун сассине илтсен-и!..
Ун сассине илтсен-и!..
....................................

Ăна хăйне курсан-и!..
Ăна хăйне курсан-и!..
....................................

Пĕлместĕп: кам çуратнă!..
Пĕлместĕп: кам çуратнă!..
....................................

Ун сассинче – ачашлăх!..
Ун сассинче – мăнаçлăх!..
....................................

Ун сассинче – Чăвашлăх!..
Ун сассинче – Пуласлăх!..
....................................

Ун сассине илтсен-и!..
Ун сассине илтсен-и!..
....................................

Ăна хăйне курсан-и!..
Ăна хăйне курсан-и!..
....................................

11.01.06

## ПĔРЛЕ ЧУХНЕ – ПĔТМЕСТПĔР!

*Анатолий Белкова*

Пĕрле чухне – пĕтместпĕр.
Пĕтместпĕрех, туссем!
«Пĕрле чухне пĕтместпĕр!» –
Чи тĕрĕс сăмахсем!

Çил-тăвăлсем улаччăр!
Хĕмленччĕр çиçĕмсем! –
Пĕрле чухне пĕтместпĕр!
Пĕтместпĕрех, туссем!

Ан тив, ан пулччăр çăмăл
Эпир утас çулсем –
Пĕрле чухне пĕтместпĕр!
Пĕтместпĕрех, туссем!

Ăмсанакан – ăмсантăр!
Ырлаччĕр – ыррисем! –
Пĕрле чухне – пĕтместпĕр!
Пĕтместпĕрех, туссем!

13.08.2001

x x x

*Андриян Николаев*
*космонавта асӑнса*

Пуҫлар-ха, тӑванӑм, «Вӗҫ, вӗҫ, куккука».
Юрлар-ха, тӑванӑм, мӑнаҫлӑн та сумлӑн.
Юрлатчӗ чунтан ку юрра Андриян,
Тӑван халӑхне пуҫ тайса саламланӑн.

Юрлатчӗ чунтан ку юрра Андриян.
Хӑш чух пичӗ тӑрӑх куҫҫуль ун юхатчӗ.
«Ан манӑр савса тав тума аннӗре!» –
Тесе вӑл пире юлташла ӑс паратчӗ.

Ак халь Андриян та – таса Чӑн Ҫӗрте.
Ӑна ҫӑлтӑрсем юратса ҫупӑрларӗҫ.
Анчах та янрать унӑн ҫепӗҫ сасси.
Анчах та сӳнмест унӑн ҫутӑ Сӑнарӗ.

Янрать аслӑ юрӑ чуна ҫӗклесе,
Чуна кисретсе, ҫӗнетсе илӗртӳллӗн!
Тӗнче ҫутӑрах, ырӑрах кун пек чух!
Аманнӑ чӗре те тапать ҫӗкленӳллӗн...

Пуҫлар-ха, тӑванӑм, «Вӗҫ, вӗҫ, куккука».
Юрлар-ха, тӑванӑм, мӑнаҫлӑн та сумлӑн.
Юрлатчӗ чунтан ку юрра Андриян,
Чӑваш Тӗнчине пуҫ тайса саламланӑн.

06.01.2007

# ПАТТĂРЛĂХ

*Валентина Егорована –*
*Олимпиада – XXII паттăрне*

Çĕкле çӳлерех ылтăнна, Валентина!
Тăван халăху куртăр ун шевлине.
Сан паттăрлăху тĕнчене тĕлĕнтерчĕ,
Кăтартрĕ Чăваш çĕнтерме пĕлнине.

Çĕкле çӳлерех ылтăнна, Валентина!
Эс тивĕçлĕ чап Кăшăлне тăхăнма.
Сана чылайччен манас çук Барселона.
Сан пек паттăр хĕр халиччен вăл курман.

Çĕкле çӳлерех ылтăнна, Валентина!
Сан пек пикесем ытларахчĕ пире.
Хăюллă та чăрсăр, сăпайлă, мăнаçлă
Пулсам эс, кашни чăн чăвашăн чĕри?

Çĕкле çӳлерех ылтăнна, Валентина,
Тăван халăху умĕнче пуç тайса.
Тăван халăхун ыр ятне эс çĕклерĕн.
Апла сан яту тухас çук манăçа!

03.09.92

# МУНКУН ЯЧЁПЕ!

Мункун ячёпе, хурăнташ та пускилём!
Мункун ячёпе саламлатăп сире!
Пире Çăлаканăн Асапĕ вĕçленнĕ!
Пире Çăлакан çĕнĕрен Тӳпере!..

Мункун ячёпе, пур ĕçчен те ыр халăх!
Мункун ячёпе, ваттисем те яшсем!
Пире Çăлакан вилĕме парăнтарнă,
Çӳле Вăл çĕкленнĕ, пире пиллесе!..

Мункун ячёпе, ман тăван Чăваш Енĕм!
Мункун ячёпе, ман тăван чăвашсем!
Пире Çăлаканăн Асапĕ вĕçленчĕ,
Çут Шанчăк Вутне тепĕр хут тивертсе!

10.04.1999

## КАНАШРАН ШУПАШКАРА КИЛНĔ ЧУХ АПАШРА ÇУРАЛНĂ САВĂ

Апашран иртсен вара,
Çывăх – Шупашкар.
Çулĕ тăвалла, паллах...
Ну, ку вăл тем мар!

Хуть мĕн калăр та мана,
Шупашкар тесен,
Çуталаççĕ çиййĕнчех
Манăн куçăмсем.

Апашран иртсен вара,
Атăл çывăхрах.
Маншăн Атăл вăл, туссем,
Аттепе танах.

Пултăм эп Европăра,
Пултăм Азире.
Тунсăхларăм эп ютра
Атăлшăн сĕре.

Юрататăп эп сана
Пĕтĕм чĕререн,
Манăн ырă та йăваш,
Савнă Чăваш Ен!

...Апашран иртсен вара,
Çывăх  - Шупашкар.
Апашран иртсен вара,
Атăл – юнашар.

14.03.1999

## МУНЧАРА

*Мунча кĕме юратакансене, мунча тути-масине ăнланакансене – пурне те! – «Мунчи тутлă пултăр!» тесе.*

Шăматкун. Мунча кĕретпĕр.
Пурте – «хамăрăннисем».
Пурте – «мунчана!» тесессĕн,
«Хаваспах!» текеннисем.

Генералĕ те кунта пур
(Халь вăл пенсире, паллах).
Пур – строитель, пур – водитель,
Пур – чиновник, пур – ăсчах...

Пĕрисем – ытла та мăнтăр.
Теприсем – ытла хыткан.
(Мĕн тăван, мунча – мунча вăл:
Курас мар тесен – куран).

Малтанах вĕр çĕнĕ милĕк
Пĕçеретпĕр киленсе.
Çапăнма унтан пуçлатпăр –
Эхлетсе те пехлетсе.

Кăштахран тухатпăр сумлăн,
Васкамасăр, чей ĕçме.
Тарсене шăлса илетпĕр,
Пикенетпĕр пуплеме.

Мĕн çинчен эпир пуплетпĕр?
Мĕн çинчен-и?.. Çĕршывра
Çук йĕрке çаплах. Çапах та
Халь – кăштах çăмăлтарах.

Шел, ҫаплах вĕренейместпĕр
Вылямашкăн футболла.
Ҫĕнтерес килет пулсассăн,
Сахалрах ҫывăрмалла!

Вашингтон ытла та сĕмсĕр.
Тĕнчене хыпса ҫăтма
Хатĕр ҫав пуҫтах. Нимле те
Ҫук-ши пӳтсĕре чарма?

Еплерех ҫĕршывччĕ пирĕн!..
Пĕтĕмпех Горбачевпа
Ельцина пула арканчĕ...
Пит вылянчĕҫ ҫав влаҫпа!..

Тав Турра - ĕлкĕреймерĕҫ
Раҫҫее хуть аркатма!
Раҫҫее те аркатсассăн,
Хĕн пулатчĕ пурăнма...

...Ай, ытла та лайăх хутнă
Мунчине паян!.. Кун пек
Хирĕҫ мар эпир, атьсемĕр,
Ҫапăнмашкăн кунĕпе!

Сывă пултăр хурăн милĕк!
Сывă пултăр сив сăра!
Сывă пултăр пирĕн туслăх!
Тултарсамăр алтăра!..

...Шăматкун. Мунча кĕретпĕр.
Пурте – «хамăрăннисем».
Пурте - «мунчана!» тесессĕн,
«Эп – халех!» текеннисем.

30.10.06

## МОРДОЛИЗАЦИ

*Эх, жалко, зеркала нет, поглядел бы*
*на свою мордолизацию!*
А.П. ЧЕХОВ. «Счастливчик».

Мордолизацийём, паллах, мордолизаци ман!..
Сухал ӳстереттём – ӳсмест сухал.
Тин çеç-ха эп çӳçе аран тураттӑм.
Халь – çӳç пӗрчи те пуç çинче сахал.

Çамкам çинче çӗн касӑсем выртаççӗ.
Ытла та ӑслӑ пултӑм пулмалла...
Эп кун пекех пуласшӑн марччӗ ӑслӑ.
Халь – çулӗ çук чакмашкӑн каялла.

Сӑмсам, тавах, памасть-ха манӑн махха –
Туять-ха шӑршӑ, шеремет, çаплах.
Йӗксӗксене аякранах сисет вӑл.
Йӑнӑшасси те пулкалать паллах.

Тутам малтан та хулӑн марччӗ манӑн.
Халь ак пӑхап та – çук-иç ман тута!..
Ытла нумай чуптурӑм çав хальхаççӑн.
Канмашкӑн вӑхӑт çитрӗ-тӗр кӑштах.

Вӑт хӑлхана эп пӗртте хурламастӑп.
Кам «пысӑк!» тет унта ман хӑлхана?!
Тавах Тура – илтмеллине илтетӗп.
Ытти вӑл – кирлӗ мар шӑв-шав кӑна.

Тата ик хăмăр куçăм пур-çке манăн!..
Эп... юрататăп, КУÇĂМСЕМ, сире!
Эсир пурришĕнех телейлĕ эпĕ,
Ман КУÇĂМСЕМ, çак Çутă Тĕнчере!

Мордолизацийĕм, паллах, мордолизаци ман!..
...Çук, тем тесен те, хамăн – хамăнах!

27.03.99

## ЧУТАЙ

Ак хăйех çырăнать ман çак сăввăм...
Пĕр сăмах ман асра халь: Чутай.
Тăшмансем ман кунта пур-и, çук-и, -
Юлташсем Чутайра ман нумай.

Ма нумай Чутайра юлташсем ман?
Ма нумай?.. Ма тесессĕн кунта
Улăп пек чăвашсем пурăнаççĕ.
Хăй те Улăп пекех вăл, Чутай.

Ĕмĕр хыççăн иртет тепĕр ĕмĕр...
Лăпкă мар-ха çаплах самана...
Малаллах эс, Чутай, ăнтăлатăн!
Мал еннех эс тĕлленĕ куçна!

Ир тăран та, ĕçе пикенетĕн.
Туй пулсан, эс сикетĕн туйра.
Пур, паллах, Чутайра ырату та...
Телейпе Юрату – нумайрах!

Ак, хăйех çырăнать ман çак сăввăм...
Пĕр сăмах ман асра халь: Чутай.
Тăшмансем ман кунта пур-и, çук-и, -
Юлташсем Чутайра ман нумай.

27.09.04

## ЧĂВАШ ЯШ-КĔРĔМНЕ

Тепĕр хут сире калатăп эпĕ,
Тусăмсем: ан писĕр халăхран!
Ĕçлĕр, пуйăр, пысăк пуçлăх пулăр –
Пурпĕрех ан писĕр халăхран!

Пĕр пек мар, паллах, эпир пачах та –
Халăхĕ ытла та аслăран.
Юман пек мăнаçлă, вăйлă пулăр –
Пурпĕрех ан писĕр халăхран!

Ансат мар пĕрре те Çын Кунçулĕ.
Ав, пĕри пурнать пит аякра ...
Пурăнăр ютра та, аякра та –
Пурпĕрех ан писĕр халăхран!

Халăхĕ ытла та лайăх пирĕн!
Халăха чунтан юратнăран,
Эп сире тархасласа калатăп:
Тусăмсем, ан писĕр халăхран!

09.02.07

## НИЛ

Кăлăхах мана хăратнă –
Çук Нилра крокодилсем!
Куçа çеç йăмăхтараççĕ
Нилăн çутă шевлисем.

Нилшăн вăхăт-и пĕр ĕмĕр?
Нилшăн вăхăт-и пин çул?..
Кам Нилпа вăйне виçесшĕн?!
Ун пеки – курап та – çук.

Нил – хăватлă! Нил – мăнаçлă!
Нил йăваш та, Нил кăра.
Тинкерсе пăхас пулсассăн,
Ку Шывра эс й ă л т куран.

Ку Шывра куратăн эсĕ
Иртнине, Пулассине.
Ку Шывра Тĕнче Илемĕ
Хăйĕнпе хăй киленет.

Ку Шывра – этем куççулĕ,
Тарĕ, юнĕ те юрри.
Килĕшсемĕр: Нил вăл – Турă.
Нил вăл – Пурăнăç Турри.

...Кăлăхах мана хăратнă –
Çук Нилра крокодилсем!
Куçа çеç йăмăхтараççĕ
Нилăн кĕмĕл шевлисем.

18.01.2000

## ЮРЛАТЬ РАШИТ ВАГАПОВ

*Рашит Вагапов аслă юрăç ячĕпе ирттерекен тутар юррисен фестивалĕн Шупашкарти уявне аса илни*

Епле юрларĕ вăл!.. Епле
Çак Сасă ман чуна кисретрĕ!
Çак Сасă, лăпкăн янраса,
Ман чунăмра Кăвайт тивертрĕ.

Мĕн чухлĕ юрату!.. Тата
Мĕн чухлĕ çутă-çутă тунсăх!
Мĕн чухлĕ ырату кунтах...
Кунта хĕвел те пур, пур уйăх...

Çапла – иртет, иртет иккен
Этемĕн ĕмĕрĕ – мĕн тăвăн.
Анчах та пурпĕрех сана
Чĕрӳ хистет: «Юрат та пурăн!»

Çапла – çав çамрăк Пикене
Эс халь тĕлĕкре çеç куратăн.
Анчах эс – савнă! Эс – саван!..
Апла пулсан, эс пурăнатăн!

...Мĕн чухлĕ Юрату!.. Тата
Мĕн чухлĕ çутă-çутă Тунсăх!..
Епле юрларĕ вăл!.. Епле
Çав каçхине хĕмленчĕ уйăх!

26.11.06

## КИЯМ МИФТАХУТДИНОВА

Исенмĕсес, Киям, юратнă тусăм!
Мĕнле унта пурнаççĕ каçалсем?
Кĕтне, паллах, халь пăрпала хупланнă.
Шур кĕрĕкпе пĕркеннĕ-тĕр хирсем.

Киям, тăванăм, эс те тĕнче каснă.
Кăштах çӳрерĕм эп те тĕнчере.
Тĕнчемĕр пирĕн аслă та илемлĕ,
Анчах Тăван Çĕршыв илемлĕрех.

Эс ачаллах чăвашсемпе туслашнă.
Эп саврăм ачаран тутарсене.
Пĕр тымартан эпир, Киям, тăванăм!
Упратăр Турă пирĕн йăхсене!

Эс чăвашла, Киям, пĕлетĕн лайăх,
Чухлатăп эп те тутарла кăштах.
Тутар юррисене эп пит саватăп.
Эс чăвашла юрлатăн пит ăста.

Рехмет сана, Киям, юратнă тусăм!
Ниме пăхмасăр Пуласси енне
Пĕр ĕмĕтпе, пĕр тĕллевпе утар-и,
Чунтан савса Аттемĕрсен Çĕрне!..

1997, 2003 çç.

## ДАГЕСТАНРА. РАСУЛ ГАМЗАТОВ УЯВĔНЧЕ

Гуниб*, Хунзах** тата Цада***.
Тата – тусем, тусем!..
Ăçта пăхатăн çавăнта –
Туссем, туссем, туссем!

Кунтах авар-юлташăм ман.
Кунтах ман тус-лезгин...
Тĕлĕнтерен эс, Дагестан!
Эс – хăв пĕр Аслă Çын!

Цада!.. Мĕн пултăр Цадаран
Хакли, илĕртӳлли?
Çут хĕвелрен те çутăрах
Кунти хĕрсен кулли.

Кунта Расулăн сассине
Упраççĕ сăрт-тусем.
Кунта Расул тăрнисене
Лăпкаççĕ пĕлĕтсем.

Кунта чăвашăн юррине
Итлерĕç юратса,
Чăваш поэчĕн сăввине
Тăнларĕç шăпланса.

Гуниб, Хунзах тата Цада.
Тата – тусем, тусем!..
Ăçта пăхатăн çавăнта –
Ытарайми туссем!

24.10.06

---

*Гуниб – Дагестанри паллă ял.
** Хунзах – Дагестанри паллă район центрĕ.
*** Цада – Расул Гамзатов çуралнă ял.

ДАГЕСТАНА, РАСУЛ ГАМЗАТОВА
АСĂНСА ИРТТЕРЕКЕН
«ШУРĂ ТĂРНАСЕМ» УЯВА КАЙСАН,
МАХАЧКАЛАРАН ЦАДАНА ÇИТСЕ КИЛНИ

*Зиетдин Даганова**

Ах, ытла та кукăр-макăр
Çак Кавказăн çулĕсем!
Ай-тур-тур епле чăтаççĕ
Ку енчи водительсем!..

Тăвалла эпирваскатпăр.
Турăçăм! Епле хитре!
Тăвĕсем епле мăнаçлă!
Еплерех тапать чĕре!..

Зиетдин Даганов питĕ
Тимлĕн тинкерет мала.
Вăл – водитель, унăн, паллă,
Питĕ тимлĕ пулмалла.

Зиетдин халь гид та пирĕн,
Пирĕн Турă та – вăлах.
Вăл пуртан эпир пушшех те
Курăнатпăр сумлăрах.

Пассажирĕсем тăваттăн
Зиетдинăн: пĕр чăваш.
Ик ингуш – ик тус, ик паттăр.
Тепри – ман тутар-юлташ.

«Тăвĕсем, паллах, илемлĕ
Дагестанăн... Пурпĕрех, –
Тет Саид Чахкиев** лăпкăн, –
Ингушсен – кăшт хитререх!»

«Ингушсен чăнах та питĕ,
Питĕ çӳллĕ тăвĕсем!» –
Тет Хусейн, Хусейн Шадиев***,
Çийĕнчех, куçне хĕссе.

Тутарпа чăваш чĕнмеççĕ.
Мĕн теес – тӳрем çĕртен
Килнĕ-тĕк, сăрт-тăвăр çук-тăк.
Тĕрĕсрех-тĕр – чĕнмесен...

«Пирĕн тăрăх та илемлĕ! –
Тет Ренат Харис****. – Хирсем,
Улăхсем, вăрман... Мĕн калăн...
Пĕтерeймĕн тĕлĕнсе!..»

«Пирĕн Атăл пур! – ку эпĕ. –
Атăлта пĕрре кăна
Çын ишсе-чăмса курсассăн
Манаймасть текех ăна!»

...Пурте, пурте килĕшетпĕр
Пĕр ансат шухăшпала:
Сăрт-тусен – хăйсен илемĕ.
Улăхсен – хăйсен... Çапла

Малаллах эпир васкатпăр
Кукăр-макăр çулпала.
Чарăнса тепре тăрасчĕ!..
Çук çав, çук – васкамалла!..

27.10.06

---

* Зиетдин Даганов – Дагестан халăх поэчĕн Абдулла Дагановăн ывăлĕ.
** Саид Чахкиев – Чечен-Ингуш АССРĕн халăх писателĕ.
*** Хусейн Шадиев – ингушсен паллă публицисчĕ.
**** Ренат Харис – Тутарстан халăх поэчĕ.

## ГУНИБРА. РАСУЛ ГАМЗАТОВ УЯВĔНЧЕ

Кăшт именсе чечек тыттарчĕ
Пике мана, ташша чĕнсе.
Кунта йăли-йĕрки çапла-мĕн.
Кунта ташлаççĕ хĕмленсе.

Пики ытарма çук илемлĕ!
Вăл, акăш пек, ишет, ишет!..
Ман куçăмран вăл, çук, тинкермĕ...
Мĕнех, мана ку килĕшет.

Кун пек чипер пике чĕнсессĕн
Туркай тăрать-и «çук» тесе?!
Е эп Чăваш Енрен килмен-и!..
Тĕнче кулать эп «çук» тесен!..

...Пĕрремĕш хут ташларăм эпĕ
Тусем çинче, ват Гунибра.
Эп ку ташша, пикем-чиперĕм,
Хĕлхем пек усрăп асăмра.

24.10.06

## МАГОМЕД АХМЕДОВА, ДАГЕСТАН ХАЛĂХ ПОЭТНЕ

Магомед, кала-ха сăвă
Сăрт-тусем çинчен –
Ĕмĕрхи мăнаçлă, вăйлă
Улăпсем çинчен.

Магомед, чи çывăх тус пек
Маншăн Дагестан.
Килĕштертĕм те – каймасть вăл
Манăн асăмран.

Эп каллех аса илетĕп
Чаплă Цадана.
Эп кунта хăна пулсаччĕ
Иртнĕ çул кăна.

Ах,епле,епле,асамлă
Сывлăшĕ кунта!
Хăй, Расул,кулать ăшпиллĕн
Санăн умăнта!

Магомед, чунтан юратрăм
Санăн çĕршывна –
Тусене те, тинĕсе те,
Санăн халăхна.

Яланах кунта ешерччĕр
Авалхи садсем.
Çĕршыва савса мухтаччăр
Чаплă сăвăçсем.

Сăрт çинче те, айлăмра та
Чи паха мул пек
Çиçтĕр танăçлăх, киленнĕн
Хăй хĕлхемĕпе.

Магомед, кала-ха сӑвӑ!
Чун килениччен
Ман паян килет итлессӗм
Дагестан ҫинчен.

03.08.07

х х х

Ан ӳпкеле, тăванăм, Шăпуна.
Ун хăйĕн те шăпи пит çăмăл мар.
Вăл – чи таса, чи тĕрĕс тӳре пек,
Ун юрамасть пачах та йăнăшма.

Ун юрамасть пачах та йăнăшма.
Ун пĕтĕмпех шута илме тивет.
Эс нимĕн те пĕлместĕн ун пирки,
Вăл сан пирки санран ытла пĕлет.

Вăл сан пирки санран ытла пĕлет.
Сана ятлать вăл, вăл сана шеллет.
Эс савăнатăн, вăл та савăнать.
Эс ӳпкелетĕн, вăл та ӳпкелет.

Ан ӳпкеле, тăванăм, Шăпуна.
Ун хăйĕн те пит ансат мар шăпи.

12.12.1999

x x x

Наполеон та
савăннă
малтан –
çур тĕнчене
парăнтарсассăн.

Кайран...
Пĕлетпĕр ыттине.
Пĕлетпĕр те...
шута илместпĕр.

Пĕлетпĕр те,
шута илместпĕр.
Çаплах çитмест пире
п у р р и.
Этем вăл –
Турă та, патша та.
Этем вăл – ăссăрлăх чури.

09.01.2008

x x x

«Эп нимрен те хăрамастăп! –
Тет мана пĕри. –
Маншăн турă та, шуйттан та –
Иккĕш те пĕрех».

«Эп нимрен те хăрамастăп! –
Тет тата тепри. –
Маншăн çук саккун! Эп вăйлă!
Эп – чи паттăрри!»

Тем тесен те хăрамаççĕ
Чăн та çакскерсем.
Хăрамаççĕ те... кĕреççĕ
Çылăха вĕсем.

Çылăхĕ пуçтарăнать вăл –
Пĕчĕккĕн, хуллен.
Çĕклейми çĕклев пулать вăл,
Çылăх, ерипен.

Авăнать вара чи паттăр,
Чи пуçтах айван.
Çăлăнăç шырать мăнтарăн.
Ӳкĕнет чунтан...

...Ма паян паттăрланать вăл?
Мĕн çитмест ăна?
Вăл чăнах та хăрамасть-ши?
Е суять кăна?..

02.06.07

x x x

Куçăхтарчĕç пулмалла –
Чунăм ыратать.
Куçăхтарчĕç пулмалла –
Темшĕн ăш вăркать.

Куçăхтарчĕç пулмалла –
Куçăхтарчĕçех.
Пит ăмсанчĕç çав мана –
Куçăм умĕнчех.

Пит ăмсанчĕç çав мана.
Ара, хам, айван,
Пĕлеймерĕм пытарма
Телее çынран.

Халь ав – чунăм ыратать.
Халь ав – ăш вăркать.
Сивĕ тунсăх чĕрене
Çĕлен пек сăхать.

Куçăхтарчĕç пулмалла...
Куçăхтарчĕçех.
Пит ăмсанчĕç çав мана
Куçăм умĕнчех.

23.01.2000

## ТИН ÇЕÇ ÇĔНĔ КĔНЕКЕ КĂЛАРНĂ ПĔР ПАЛЛĂ СĂВĂÇА

Эп ăнланатăп санăн тунсăхна.
Эп ăнланатăп санăн асапна.
Эп сан пекех çак çăткăн çĕр çинче
Канăçăма çухатнă тахçанах.

Эп килĕшетĕп: улшăнчĕ тĕнче.
Çав Çавраçил турех хăйĕн ĕçне:
Кивви чăл-пар арканчĕ те, ç ĕ н н и
Пире пит кăтартмарĕ ыррине.

Çапла – пире пайларĕç ик пая.
Халь пурте пур чăнах та пĕрисен.
Вĕсен пур мул, пур влаç, пур пуласси...
Ыйткалама тивет халь теприсен.

Чăнах та йывăр, йывăр пурăнма –
Асап чулне йăтса мала утма.
Анчах кунтан çĕр хут йывăртарах
Çын асапне, çын нушине курма.

Эп ăнланатăп санăн йыхравна –
Эс тепĕр хут ĔНЕРХИНЕ чĕртесшĕн.
Ĕнер çунса кĕлленнĕ вучаха
Паян эс тепĕр хут хĕмлентересшĕн.

Мана та лайăх пулнăччĕ ĕнер.
Ĕнер хĕвел те çутăрах çиçетчĕ.
Ĕнер хĕрсем, мана курсассăнах,
«Эп – сан!» тесе, куçĕсене хĕсетчĕç.

Мĕн каласси – пит лайăхчĕ ĕнер!..
Аса илсен, куççуль юхать куçран.
Анчах та юлчĕ ĔНЕРТЕ ĕнер,
Кайма пĕлмест пулсассăн та асран.

Анчах та юлчĕ ĔНЕРТЕ ĕнер...
Апла пулсан, тăванăм, сан та ман
ПАЯН тивет тӳсме те кĕрешме.
Тивет ПАЯН мал еннелле утма.

Паян! паян! паян пурăнмалла! –
Ниме пăхми, шăла çыртса!.. Пире,
Ан тив, шеллеччĕр хăшĕпĕрисем...
Эпир санпа телейлĕ пурпĕрех!

Эпир санпа телейлĕ пурпĕрех!
Çакна кăна каласшăн эп сана.

05.04.07

## В Ă Л - ПУР

Кайма вăхăт çитсен – каятпăр.
Кайма вăхăт çитсен кăна.
В Ă Л – йăлт пĕлет. Ă Н А – ан ятлăр.
Итлес, шанас пулать Ă Н А.

В Ă Л – пур. Эпир Ă Н А курмастпăр.
Пире паман Ă Н А курма.
Эпир В Ă Л пуррине туятпăр –
В Ă Л ирĕк панине кура.

Эпир У Н Пилĕпе пурнатпăр,
У Н Пилĕпе. У Н айĕнче.
Кайма вăхăт çитсен – каятпăр.
Каллех тăма У Н умĕнче.

03.03.06

x x x

Е вăл – мана, е эп – ăна!..
Чаксах пырать вăй-халăм.
Манран килмест – хăй усăнать
Ик чул пек икĕ аллăм.

Е вăл – мана, е эп – ăна!..
Мĕн чухлĕ курайманлăх
Çиçет ун тĕксĕм куçĕнче!
Мĕн чухлĕ курайманлăх!

Вăл хатĕрленнĕ лайăхрах.
Çак саманта вăл кĕтнĕ.
Мана яланлăх тĕп тума
Нумай вăл ĕмĕтленнĕ.

Епле вăл кураймасть мана!
Паян вăл питĕ вăйлă.
Ăна паян параççĕ вăй
Каварлăхпа хаярлăх.

Е вăл – мана, е эп – ăна!..
…Тулсах пырать вăй-халăм.
Манран килмест – хăй çĕкленет
Ик чул пек икĕ аллăм…

19.04.2007



# *Уяв вĕçленчĕ - тăсăлать Уяв*

x x x

Эп ĕçĕттĕм те ĕçĕттĕм
Ку симпыла, туссем!
Эп юрлăттăм та ташлăттăм
Çĕр каçипе, туссем!

Эп манăттăм, йăлт манăттăм
Кĕçĕрлĕхе, туссем!..
Анчах тивет-çке урăлма
Ыран ирпе, туссем!

Анчах тивет-çке урăлма
Ыран ирпе, туссем!
... Ĕçместĕп эп, ĕçместĕп эп
Ку симпыла, туссем!..

...Ĕçетĕп эп, ĕçетĕп эп
Ку симпыла, туссем!
Мĕн-ма тесен телейлĕ эп,
Телейлĕ эп, туссем!..

Ыран унта куç курĕ-ха,
Куç курĕ-ха, туссем...
Тен, паян çеç телейлĕ эп,
Тен, паян çеç, туссем?!

14.03.99

## ЭТЕМ ÇĔКЛЕМĔ

*Геннадий Давыдова*

асапĕ те
хавасĕ те
Турри парсан – телейĕ те...
телейĕ те
инкекĕ те
ялан суран суранĕ те...

хисепĕ те
мухтавĕ те
кĕвĕçӳпе элекĕ те...
тумхахĕ те
пăрлакĕ те
чун-чĕрери хĕлхемĕ те...

пехилĕ те
ылханĕ те
сĕм тĕттĕмри шыравĕ те...
çӳп-çапĕ те
тусанĕ те
ик куç тулли Илемĕ те...

вĕçевĕ те
ӳкевĕ те
ялан янран Йыхравĕ те...
хавасĕ те
асапĕ те
Телейĕ те!.. Телейĕ те!..

15.07.06

x x x

Тавах сана çак каçшăн, çак Юмахшăн!
Çак Атăлшăн, çак уйăхшăн тавах!
Мана каçхи ăшпиллĕ кăнтăр çилĕ
Кун пек ачашламанччĕ тахçанах.

Кăвайт çунать... Çунать кăвайт йăвашшăн.
Лăпланнă Атăл канлĕн тĕлĕрет...
Таçта сасартăк çиçĕм ялкăшать те ...
Кăшт хыттăнрах тапса илет чĕре.

Чĕнместĕн эсĕ. Эпĕ те чĕнместĕп.
Капла та паллă,паллă пĕтĕмпех:
Çунать кăвайт... Лăпланнă анлă Атăл...
Шăвать çут уйăх хăйĕн çулĕпе.

Ан тив, ыран каллех кĕрлетĕр тăвăл!
Ан тив, йăлт пултăр урăхла ыран!..
Паян вара тата кăштах, тата кăшт
Çак Ырлăх хуçалантăр таврара!..

...Чĕнместĕн эсĕ. Эпĕ те чĕнместĕп.
Капла та паллă, паллă пĕтĕмпех:
Кăвайт çунать... Канать лăпланнă Атăл...
Чĕре сывпулашать тунсăхĕпе...

16.06.07

## МАНА ЭСИР ПАРНЕЛЕСЕМĔР...

*Г.З.Семенова*

Эсир мана парне парасшăн, теççĕ.
Пĕлместĕр, теççĕ, мĕн памаллине.
...Мана эсир парнелесемĕр... Канлĕх –
Ялан вутра çунан чун канлĕхне.

Эсир мана парнелесемĕр... Шăплăх.
Эп тунсăхларăм Шăплăхшăн, туссем.
Тĕнче – кĕрлет!.. Кĕрлет пулсан – кĕрлетĕр!
Эп Шăплăхпа курасшăн киленсе.

Мана эсир парнелесемĕр... Тунсăх.
Эп çак асар-писер хĕвĕшӳре
Халтан кайса, тунсăхлама та мантăм.
Чĕре-и вăл – тунсăхламан чĕре?

Эсир мана парнелесемĕр... Тӳсĕм.
Тӳсмесĕр майĕ çук-çке пурăнма.
Çук, тӳсмен мар эп. Сахал мар эп тӳснĕ,
Çапах та тӳсесси – пин хут нумай.

Мана эсир парнелесемĕр... Ирĕк.
Эп ирĕклĕ пулсаччĕ тахăçан.
Ах, еплерех эп ирĕклĕ пулсаччĕ!..
Ах, еплерех çиçетчĕ куçăм ман!..

Эсир мана Юрату çеç, туссемĕр,
Тархасшăн, ан парнелĕр. Тав Турра –
Çак аслă, çак хăватлă çутă Туйăм
Ĕлĕкхиллех çиçет-ха ман чунра.

...Эсир мана парне парасшăн, теççĕ.

05.03.06

## ЕНТЕШЁМСЕНЕ-ТАНТĂШĂМСЕНЕ

Эсир мана мулпа тĕлĕнтереймĕр.
Мана тĕлĕнтереймĕр влаçăрпа.
Мул – харăсах – телей те вăл, инкек те.
Айван кăна каппайланать влаçпа.

Мана эсир тĕлĕнтерсемĕр ырă,
Паха та пархатарлă ĕçĕрпе.
Тата эсир мана тĕлĕнтерсемĕр
Кăвар пек хĕмленен чĕрĕрсемпе.

Мана эсир, туссем, тĕлĕнтерсемĕр
Çынлăхăрпа та ыр кăмăлăрпа.
Тата мана эсир тĕлĕнтерсемĕр
Чуна çĕклен мăнаçлă юррăрпа.

Кунтан та ытларах эп тĕлĕнесшĕн
Эсир маттур та паттăр пулнинчен,
Эсир Тăван Чĕлхемĕре, туссемĕр,
Чунтан та чĕререн юратнинчен.

Вара, телейлĕскер, эп уççăн калăп:
«Чăваш Енре пĕтмен-ха Улăпсем!»
... Халь пĕлтĕр-и, мĕнрен эп тĕлĕнесшĕн?
Халь пĕлтĕр-и, епле ман ĕмĕтсем?

13.10.07

## ХЫРАЙ ЁНЕЛ

Вăл... Кайăк пек – Хырай Ёнел.
Чăнах та кайăк пек!
Вăл сарнă та ик çунатне,
Вĕçет хăй çулĕпе.

Вĕçет вăл кăнтăр çутипе.
Вĕçет вăл тĕттĕмре.
Кив ĕмĕртен тухать те вăл,
Кĕрет çĕн ĕмĕре.

Вăл курнă тăвăл, урнă çил.
Вăл курнă шартлама.
Вутра вăл çуннă, çав-çавах
Çулне вăл çухатман.

Ун пур Тĕллевĕ, Чунĕ пур.
Ăна сават Тÿпе.
Апла вăл вĕçтĕр, вĕçтĕрех
Пуласлăх çулĕпе.

Вăл... Кайăк пек – Хырай Ёнел.
Чăнах та Кайăк пек!.

08.01.2008

## ИКĔ ЧУН

«Ыратуран кăна тăрать ман чунăм», -
тесе каларĕ пĕр этем паян.

Ун еннелле тинкертĕм те эп куртăм
чăнах та питĕ пысăк ырату.

...Ман чунăм?
Ыратмасть-им манăн чунăм?
Ай еплерех вăл ыратать хăш чух!

...Çапах ыратуран кăна тăмасть вăл темшĕн.
Тăрать вăл ... иксĕлми Юратуран.

04.10.07

## ХĔЛ

Часах ак хĕл те ларĕ.
Ларать-ши?.. Ларатех!
Хĕл вăл, «ан кил!» тесен те,
Килет çав, килетех!

Паллах çу кунĕ мар вăл,
Хĕл кунĕ. Пурпĕрех
Хĕл кĕрлесе çитсессĕн,
Тĕнче илемлĕрех.

Çапла, çу кунĕ мар вăл,
Хĕл кунĕ. Еплерех
Хăш чух хĕн кăтартать вăл
Пире çав чĕмере.

Хăш чух вара вăл ăшă.
Хĕл пек те мар пачах:
Тумла тумлать хавассăн,
Тапса тухать калча...

Мĕн тăвăн пурте кирлĕ.
Хĕл кунĕ те кирлех.
... Килсех килет-ши хĕлĕ?
Килет-тĕк – килтĕрех!

26.10.07

## ÇУРКУННЕ ШĂРШИ

*Александр Якушкина*

Епле вăл тутлă – Çуркунне шăрши!..
Пĕрремĕш хут сывланă чух унпа –
унпа, çак çепĕç те асамлă сывлăшпа,
эс ăнланатăн пĕтĕмпех...
Эс ăнланатăн:
улшăнчĕ Тĕнче.
Эс ăнланатăн:
иртрĕ эс тахçан
хавхаланса та савăнса кĕтни,
кĕтсе илни,
пурна-киле сана йăлăхтарни...
Эс ăнланатăн:
халь, çак самантран,
çак сывлăшпа сывланă хыççăн,
эс – у р ă х çын!..
Эс
Тĕнчене
у р ă х куçпа куратăн!
Эс
у р ă х л а сывлатăн!..

...Йĕри-тавра юр ирĕлет,
тумла тумлать...
Тӳпе тулли – Хĕвел! Хĕвел! Хĕвел!..
Епле вăл тутлă – Çуркунне шăрши!..

15.03.06

## КĔРХИ ÇĂКА ÇИНЧИ КИВ ÇУЛÇĂ

Ӳкмелле.
Анчах та ӳкейместĕп.
Ӳкмелле.
Ман вăйăм çук
ӳкме.
Ман ӳкмешкĕн
кăмăлăм та çуккă.
Мĕн тесе ман ӳкмелле
халех?
Мĕн тесе ман ӳкмелле?!
Кунта эп
курнă Кун Çути.
Кунта
эп Тĕнче Илемĕпе киленнĕ.
Хам та эп
илемсĕр пит пулман.
Çилĕсем, паллах, вĕретчĕç
тĕрлĕ.
Хăш чухне ачашчĕ
çавскерсем.
Хăш чухне вара
ытла кăраччĕ.
Кăра çеç-и – чунсăрччĕ вĕсем!..

Ӳкмелле.
Анчах та ӳкейместĕп.
Ӳкмелле.
Ман кăмăл çук
ӳкме!

21.10.06

## ЯЛ. ЮР. ПИТЁ НУМАЙ ЮР

Чăрăш çинче – юр! юр! юр!..
Пӳрт тăрринче – юр! юр! юр!..
Кил картинче – юр! юр! юр!..
Ял хушшинче –юр! юр! юр!..
Уйăх çинче – юр! юр! юр!..
Хěвел çинче – юр! юр! юр!..

Хěвел çинче – юр, юр, юр?!
Хěвел çинче – юр! юр! юр!
Уйăх çинче – юр! юр! юр!
Ял хушшинче – юр! юр! юр!
Кил картинче – юр! юр! юр!
Пӳрт тăрринче – юр! юр! юр!
Чăрăш çинче – юр! юр! юр!..
Ман чунăмра – юр! юр! юр!..
Юр...

04.03.06

x x x

Çын çулĕпе утмастăп.
Ман хамăн Çулăм пур.
Вăл паян мар пуçланнă.
Вăл вĕçленмест ыран.

Эп ку Çула шыранă
Каçпа та кăнтăрла.
Эп пушхирте аташнă
Эп путнă шурлăхра.

Мана Хĕвел çунтарнă.
Мана лăсканă çил.
Анчах та утнăçемĕн
Эп пултăм вăйлăрах.

Çын çулĕпе утмастăп.
Ку вăл хăйех – Телей.
Ман хыççăн–и?.. Тархасшăн!
Ман хыççăн – утчăрах!

08.06.07

x x x

*Александр Григорьева*

Чĕре ăшшине упрама вăхăт çитрĕ.
Иккен вăл, çак вăхăт, çитет-çитетех.
Иккен çут тумлам, пĕр ӳкме пикенсессĕн,
Вĕçсессĕн-вĕçсессĕн, ӳкет-ӳкетех.

Иккен çĕр çинче çук сӳнмен пĕр кăвайт та.
Хĕвел те иккен çиçеймест яланах.
Чĕре ăшшине упрама вăхăт çитрĕ.
Ак мĕн эп ăнлантăм паян аранах.

28.01.07

# ТĔЛЛЕВ ÇЕÇ ПУЛТĂР

Çук халăха та
пур тума пулать.
Пур халăха та
çук тума пулать.

Тĕллев çеç
пултăр.
Пултăр çеç
тĕллев.

22.03.06

## ПИРЕ, ЧĂВАШСЕНЕ, ПАЯН...

Сасă кирлĕ пире, Сасă кирлĕ –
Чунсене кисретекен Сасă кирлĕ!
Кĕрешме йыхăракан Сасă кирлĕ!
Сасă кирлĕ пире, Сасă кирлĕ!

Çулăм кирлĕ пире, Çулăм кирлĕ –
Чунсенче хĕмленекен Çулăм кирлĕ!
Тĕттĕме тĕп тăвакан Çулăм кирлĕ!
Çулăм кирлĕ пире, Çулăм кирлĕ!

Шанчăк кирлĕ пире, Шанчăк кирлĕ –
Чунсене вăй паракан Шанчăк кирлĕ!
Çăлтăр пек ялкăшакан Шанчăк кирлĕ!
Шанчăк кирлĕ пире, Шанчăк кирлĕ!

Шанчăк кирлĕ пире, Шанчăк кирлĕ ...
Çулăм кирлĕ пире, Çулăм кирлĕ ...
Сасă кирлĕ пире, Сасă кирлĕ ...

04.10.07

x x x

Хăйне хăй юратман халăха
ан юратăр.
Кун пек халăхăн çук пурпĕрех
пуласси.
Хăйне хăй юратман халăх
нишлĕ те мĕскĕн...
Сас парсан та çавах илтĕнмест
ун сасси.

Хăйне хăй юратман халăхсем
вилсе пĕтнĕ.
Паян кун та вилеççĕ вĕсем
ерипен ...
... Кун пек халăх ачи
пулас марччĕ те манăн.
Е май çук-ши тармашкăн
Шăпа çырнинчен?..

29.09.07

x x x

Çаврăнать Çĕр чăмăрĕ
Манăн айăмра.
Юрласа утатăп эп
Хамăн çулăмпа.
Хĕвеле пуç тайрăм та
Алтăр Çăлтăра
Тытрăм та пушатрăм эп
Ăшăм хыпнăран.

Çаврăнать Çĕр чăмăрĕ
Манăн айăмра.
Юрласа утатăп эп
Хамăн çулăмпа.
Утмалли нумай-ха ман.
Утмалли – нумай.
Пур-ха вăйăм, халăм пур
Юрласа утма.

Ут, Туркай, утах, Туркай,
Утнă чух уру.
Янăратăр тĕнчипех
Сан ансат юрру.
Çаврăнтăр Çĕр Чăмăрĕ
Хăйĕн еккипе.
Ут, Туркай, утах, Туркай,
Турă Çулĕпе!

20.01.09

## ТУПМАЛЛИ

Чăнлăх ............ 6
Тĕрлĕрен ............ 7
Пĕрисем шутлаççĕ-тĕр ............ 8
Чĕре суранĕ ............ 10
Усăллă канаш ............ 11
Ĕмĕрхи ............ 12
Камран тата мĕнрен кулатăр?! ............ 13
Малтан Çынна юратăр ............ 14
Пулать темле те ............ 15
Вăл авăннă кăна ............ 16
Тăшманăмсене ............ 17
Поэт тата патша ............ 18
Телей кайăкне ............ 19
Хăварăр-ха пĕччен мана, тархасшăн! ............ 20
Чиркÿ хĕресĕ хĕвелпе хĕмленчĕ ............ 21
Ырă сунаканăма ............ 22
Çĕнтерÿçĕ ............ 23
Пĕрне, вăхăтлăха «çÿле кайнăскере» ............ 24
Ан шутла ............ 26
Пĕчĕк туслăх та – пысăк пулăм ............ 27
Мĕншĕн ман ăмсанмалла сана? ............ 28
Тусăмсене. Шанма пăрахманшăн ............ 29
Чим! ............ 30
Мана эс ăнланасшăн-и? ............ 31
Эп кăлăхах сана, Шăпам, ятлатăп ............ 32
Хырай Ĕнел масарĕнче ............ 33
Каçар йĕркеллĕ савайманшăн ............ 34
Алăк ............ 35
Ай-хай ытла та ырă ............ 36
Поэт юратăвĕ ............ 37
Саччем так сасартăк? ............ 38
Хăйех килет, ак, вăл пуçа ............ 39
Çăлтăрăн – ялкăшмалла ............ 40
Ăна курсан ............ 41
Эс ыйтнине сана эп параймастăп ............ 42

Эп сана «юрататăп» тесе каламанччĕ............ 43
Тĕкĕр умĕнче ................................................ 44
Ыйхă вăйĕ ..................................................... 45
Савăнăç.......................................................... 46
Эп куратăп та, эс ăнланмастăн...................... 47
Пулать те-çке, пулать те-çке Хĕрарăм! … .... 48
Юрату............................................................ 49
Те чăнах та юрататăр?.................................. 50
Кун пек юрату та пулать-шим? ................... 51
Анаткасра .................................................... 52
Тутарстан халăх поэтне Ренат Хариса............ 54
Хырай Ĕнел чăвашĕсене – пуçăма тайса ....... 56
Уяв вĕçленчĕ … Тăсăлать уяв....................... 57
Тĕллев çеç пултăр ......................................... 58
Хăрушă!......................................................... 59
Пепке............................................................. 60
Тепĕр Юрăççăр юлчĕ ман халăхăм.................. 61
Ку пуçлăх ...................................................... 62
Шурлăх .......................................................... 64
Ячĕшĕн .......................................................... 65
Раççее. Тăван çĕршывăма.............................. 66
У .................................................................... 68
Хамăра хамăр тĕп тăватпăр ........................... 69
Тем пек лартса парасчĕ палăк ....................... 70
Кама айăплас çак инкекшĕн, çак тертшĕн?! .. 71
Ан хăйăр хурлама ман халăха! ...................... 72
Çĕçпĕл Мишшине – чечек кăшăлĕпе пĕрле .. 73
Маргарита Кабетована - пĕртенпĕрскерĕмĕре 74
Пĕрле чухне - пĕтместпĕр! ........................... 75
Пуçлар-ха, тăванăм, «Вĕç, вĕç, куккука»....... 76
Паттăрлăх...................................................... 77
Мункун ячĕпе! .............................................. 78
Канашран Шупашкара килнĕ чух
Апашра çуралнă сăвă..................................... 79
Мунчара......................................................... 80
Мордолизаци................................................. 82
Чутай............................................................. 84
Чăваш яш-кĕрĕмне ........................................ 85

Нил ............................................................... 86
Юрлать Рашит Вагапов .................................. 87
Киям Мифтахутдинова.................................... 88
Дагестанра. Расул Гамзатов уявĕнче .............. 89
Дагестана, Расул Гамзатова асăнса
ирттерекен «Шурă тăрнасем» уява кайсан .... 90
Гунибра. Расул Гамзатов уявĕнче .................. 92
Магомед Ахмедова, Дагестан халăх поэтне .. 93
Ан ўпкеле, тăванăм, Шăпуна .......................... 95
Наполеон та савăннă малтан .......................... 96
«Эп нимрен те хăрамастăп!» .......................... 97
Куçăхтарчĕç пулмалла .................................... 98
Тин çеç çĕнĕ кĕнеке кăларнă пĕр
паллă сăвăçа .................................................. 99
В Ă Л – пур.................................................. 101
Е вăл – мана, е эп – ăна ................................ 102
Эп ĕçĕттĕм те ĕçĕттĕм .................................. 104
Этем çĕклемĕ ................................................ 105
Тавах сана çак Каçшăн, çак Юмахшăн! ....... 106
Мана эсир парнелесемĕр .............................. 107
Ентешĕмсене-тантăшăмсене ......................... 108
Хырай Ĕнел .................................................. 109
Икĕ чун ........................................................ 110
Хĕл ............................................................... 111
Çуркунне шăрши ........................................... 112
Кĕрхи çăка çинчи кив çулçă ......................... 113
Ял. Юр. Питĕ нумай юр ................................ 114
Çын çулĕпе утмастăп ..................................... 115
Чĕре ăшине упрама вăхăт çитрĕ .................. 116
Тĕллĕв çеç пултăр ......................................... 117
Пире, чăвашсене, паян… .............................. 118
Хăйне хăй юратман халăха ан юратăр ......... 119
Çаврăнать Çĕр чăмăрĕ ..................................120

Валерий Владимирович Туркай

# ВĔÇЛЕНМИ ВĔÇЕВ
# И ВЕЧНЫЙ ПОЛЕТ

## CĂBĂCEH ПУХХИ
Сборник стихов
(на чувашском языке)

Редактор: О.Н. Егорова
Художник: И.В. Туркай

Подписано к печати 09.02.09 г. Формат 84x108 1/32.
Бумага офсетная. Тираж 3000 экз

ООО «Издательский дом «Пегас».
428000, г. Чебоксары. ул. Ленинградская, д. 24.

100,20